Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 декабĕр 27 ытларикун 296 (5109) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 0 — 67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Большевикла агитацишĕн

Политикăлă агитаци пирĕн çĕршывăн пурнăçĕнче пит те пысăк вырăнта тăрать. Политикăлă агитаци туса, епĕр Парти Тĕпкомĕ тата Сталин йулташ кăларса тăратнă задачăсене халăха ăнлантарса паратпăр, ĕççыннисене çав задачăсене ăнăçулăн пурнăçа кĕртме мобилизацилетпĕр.

Политикăлă агитаци вăйхăвачĕ пысăккине, рабочисемпе колхозниксем тата совет интеллигенцийĕ политикăлă ыйтусемпе хытă интересленнине ăнланса илнĕ çĕрте парторганизацисем большевикла агитацине куллен, тăтăшах туса пыраççĕ. Çакăн пек парторганизацисен агитатăрĕсем çителĕклĕ, вĕсем большевикла агитаци ĕçне çĕнĕ вăйсене активлăн хутшăнтараççĕ. Большевикла агитацине лайăх организацилелĕ çĕрте производствăлă ĕçсем те ăнăçулă пулса пыраççĕ. Çапла, Шупашкарти авторемонт савăтĕнче, Йетĕрне районĕнчи Стрелецк колхозĕнче политикăлă агитаци ĕçне лайăх йĕркелесе йанă. Кунта коммунистсемпе комсомолĕцсем, сочувствуйушчисем çеç мар, партире тăман активиссем те агитаци ĕçне чĕререн йуратса туса пыраççĕ. Авторемонт савăчĕ хăйĕн промфинпланне ăнăçлă тултарса пырать. Стрелецк колхозĕ районри малти вырăна тухнă,—çаксем ĕнтĕ политикăлă агитаци результачĕсем пулса тăраççĕ.

Анчах та халĕ те политикăлă агитаци ĕçне хакламан руководителсем те тупăнкалаççĕ-ха. Унпек руководителсем парти политикине, партипе правителствă решенийĕсене çине тăрса, ывăнмасăр, ÿркенмесĕр массăсене ăнлантарса парас вырăнне, ытларах командăлама-администрацилеме йуратаççĕ. Нимĕнле приказпа, нимĕнле распорйажени те массăпа политикăлă агитаци пек мобилизацилеме, револьуцилĕ сыхăлăха çĕклеме пултарайманнине ăнланмаççĕ. Çакна Хĕрлĕ Чутай, Канаш районĕсенчи парторганизацисен кивĕ руководствин практикисем уççăн кăтартса пачĕç. Канаш, Хĕрлĕ Чутай районĕсем пур ĕçсем тăрăх та кайа йулса пынă, çакă вара, чи малтан, парторганизацисем халăх хушшинчи политикăлă ĕçе начар вăйсăрлатса йанинчен, тăшмансене тата вĕсен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене пĕтерме массăна мобилизацилеменнинчен килнĕ. Çав районсенче политикăлă агитаци ĕçне пăрахса, ун вырăнне администрацилес çул çине тăнă. Политикăлă-массăлă ĕçе вăйсăрлатни çинчен Шăхасан, Трак районĕсенчен те сигналсем килеççĕ. Шăхасан районĕнче суйлав кампанийĕсем вăхăтĕнче ĕçленĕ агитколлективсем саланса кайнă, парти райкомĕ агитатăрсемпе ĕçлеме пăрахнă. «Тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх, хамăр çĕршыври социалисăм строителствинче тăракан задачăсем ыйтăвĕсем тăрăх колхозниксен, служăщисен пухăвĕсенче докладсем туса парасси, калаçусем туса ирттересси кун йĕркинчен тухса ÿкнĕ», тесе пĕлтерет пирĕн Шăхасанти корреспондент. Парти Трак райкомĕн секретарĕ пулнă Свешникăв, парти Обкомĕн кивĕ тăшманла руководствин кайашĕ, районра партилĕ-массăлă ĕçе аркатса пынă. Трак районĕнчи чылай колхозсенче партин Чăваш облăç организацин XIX-мĕш конференцин, обкомăн II-мĕш пленумĕн решенийĕсене колхозниксем хушшинче ăнлантарса паман. Çак районри Албахтинă, Упи йалсовечĕсенчи колхозсенче политикăлă ыйтусене ăнлантарса парас йĕнĕпе колхозниксен пухăвĕсем пулманни 2 — 3 уйăх çитет ĕнтĕ.

Большевикла агитаци ĕçĕнче формалисăма, бÿрократисăма татăклăнах пĕтерес пулать. Кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче çеç 10—15 минут хушши пухăнса, хаçатри уйрăм статйасене вуласа тухни большевикла агитацине тивĕçлине туни пулмасть-ха. Политикăлă ыйтусем тăрăх лекцисем, докладсем тăвассине анлăн сармала, рабочисен, колхозниксен, совет интеллигенцин ыйтăвĕсем çине тĕрĕс ответ памала, калаçусене чĕрĕ, интереслĕ ирттермеле. Большевикла агитаци содержанине лайăхлатмала, унăн нахалăхне ÿстермеле.

«ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ» тухни политикăлă агитаци ĕçне çÿлĕ пусăма хăпартма хушать. Халĕ уйрăмăнах пичет агитацин рольне çĕклемеле. Агитатăрсен, политикăлă-массăлă ĕçе тунă чухне, пичетпе вăйлăн усă курмала. Агитатăрăн ĕçĕ хаçат вуласа панипех пĕтмест. Унăн ĕçĕ тата—массăсене хаçат-журналсем, брошÿрăсем **харпăр хăй тĕллĕн вулама хăнăхтарасси,** вĕсем ăнланман ыйтусене тĕплĕн ăнлантарса парасси пулать.

ПСК(б)П историйĕ—кадрсене идейлă воспитани памалли, партири тата партире мар большевиксен револьуцилĕ сыхăлăхне хăпартмалли хăватлă хĕçпăшал пулса тăрать. Политикăлă событисем çинчен халăха ăнлантарса панă чухне, партипе правителствă решенийĕсене пурнăçа кĕртме вĕсене мобилизацилесе, агитатăрăн хăйĕн пĕтĕм ĕçне «ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ» тăрăх туса пымала. Çак задачăна ăнăçлă пурнăçлас тесен, парти организацисен чи малтан агитатăрсене хăйсене вĕрентсе большевисăмпа хĕçпăшаллантармала.

Парти организацисен агитаци ĕçне пĕтĕмĕшле, пурнишĕн те пĕр пек туса пырассинчен сыхланас пулать. Палта учителсем, врачсем, йалсоветра, колхоз правленийĕнче ĕçлекенсем пур, çав вăхăтрах йалта хутла сахал пĕлекенсем те чылай. Лекци, калаçу халăхăн кашни сийĕ валли хăйне уйрăм пулмала. Анчах халĕ те нумай çĕрте «пурне те çавăрса илес», пурнишĕн те пĕр пек калаçу туса ирттерес йăла пур-ха. Паллах, çакăн пек агитацин витĕмлĕхĕ, халăха мобилизацилес пултарулăхĕ сахал. Халĕ пирĕн агитаци ĕçĕ касхи сменăра ĕçлекенсем, пĕчĕк предприйатисенче ĕçлекенсем, артелсенче ĕçлекенсем, уйрăмах хĕрарăмсем хушшинче çителĕксĕр пырать. Партипе комсомол организацисен çак ĕç çине ытларах çаврăнса пăхмала.

Парти Тĕпкомĕ: совет интеллигенцийĕ çине йĕрĕнсе, тискеррĕн, хулиганла пăхни пулмала мар, тесе кăтартса пачĕ. Совет интеллигенцийĕ çине йĕрĕнсе пăхни агитаци ĕçĕнче те палăрнă. Врачсем, учителсем, учрежденисенче ĕçлекенсем—вĕсем нумай вĕреннĕ çынсем тесе шутласа, чылай çĕрте совет интеллигенцине политикăлă воспитани парас ĕçе хакламан. Халĕ, çак çитменлĕхе пĕтерсе, политикăлă агитаци ĕçне куллен туса пырса, кадрсене политикăла воспитани парассине большевикла йĕркелесе йамала, вĕсен револьуцилĕ сыхăлăхне хăпартмала.

Политикăлă агитаци ĕçне халăха 1939 çулхи халăх переписĕ çинчен, Чăваш парторганизацин XIX-мĕш конференцин, Обкомăн II-мĕш пленумĕн решенийĕсене, 1939 çулта вăйлă тырпул туса илес задачăсене, йалхуçалăх артелĕн Сталинла уставне тĕрĕс пурнăçа кĕртесси çинчен ăнлантарас хапрăк-савăтсенче те, колхозсенче те ĕç дисциплинине çирĕплетес, социалисăмла ăмăртупа стахановла йухăма анлă сарса йарас йĕнĕпе туса пымала.

Партин Чăваш облăç организацин XIX-мĕш конференцийĕ ССРС, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра агитаци ĕçĕнче тунă çитĕнÿсене çирĕплетме, агитаци ĕçĕн нахалăхне, унăн большевикла паттăрлăхне, вичкĕнлĕхне хăпартма хушса хăварчĕ. Парторганизацисен конференци решенине пурнăçа кĕртсе, политикăлă агитаци ĕçне вăйлатса, хамăрăн кадрсене, пĕтĕм ĕççыннисене большевикла воспитани парассине, вĕсен револьуцилĕ сыхăлăхне çÿлĕ çĕклемеле. Политикăла агитаци ĕçне вăйлатнипе, хамăрăн кадрсен тата пĕтĕм ĕççыннисен револьуцилĕ сыхăлăхне хăпартса, тăшмансене тата вĕсен сăтăрла ĕçĕн йулашкийĕсене тĕппипех пĕтерессишĕн кĕрешме мобилизацилемеле.

Йакутск—Тикси—Йакутск

Гурйĕв льотчикăн польарти хăйулă вĕçевĕ

Çурçĕр тинĕс çулĕсен тĕп управленин Левă авиагруппин льотчикĕ Гурйĕв йулташ хальхи вăхăтра польар касĕн хĕллехи йăвăр условийĕсенче иккĕмĕш хут вĕçет. Унăн вĕçевĕн маршручĕ: Йакутск—Тикси—Йакутск.

Çанталăк сивĕ тăрать пулин те, вĕçнĕ чухне тавралăх начар курăнать пулин те йăвăр çулăн пĕрремĕш çур пайне ăнăçлăн вĕçсе тухнă. Декабĕрĕн 23-мĕшĕнче Гурйĕв йулташ тытса пыракан „СССР—Н-116" самольот Тикси бухтинче анса ларнă, вăл унта 8 пассажир, грузсем тата почтă илсе пынă.

Çанталăк лайăх пулсан, декабĕрĕн 26-мĕшĕнче Гурйĕв йулташ Тиксирен кайала киме вĕçсе тухать.

(ТАСС).

Словакире йеврейсене хирĕç саккун кăларма хатĕрлеççĕ

Словаки правителстви йеврейсене хирĕç саккун кăларма хатĕрленет. Саккун пройектне Словакири фашисла парти лидерĕ Сидор хатĕрленĕ. Ку пройект „виççĕмĕш империре" кăларакан саккунсенчен пĕре те уйрăм мар. Çĕнĕ саккун тăрăх, йеврей ачисене шкулсенче 4-мĕш класран пуçласа вĕренме чараççĕ. „Арийецсене" йеврей çыннисемпе хутшăнассăн хытă айăплама пулать. (ТАСС).

Германи Чехословакин шалти ĕçĕсене хутшăнать

Фашисла Германи хăйĕн Чехословакири агентурипе — Чехословаки правителстви ирĕк панă тăрăх çĕнĕрен тунă фашисла партипе—усă курса, республикăн шалти пурнăçне ытларах та ытларах уççăн хутшăнма пуçланă.

Нимĕç фашисĕсем Чехословакире пурăнакан нимĕç çыннисем хушшинче „рассăла принципсене" пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Чылай хуласенче нимĕç фашисĕсем хăйсен аллине демократилĕ хаçатсене, театрсене, киносене йарса илеççĕ. Брно хулинчи „Искусства çурчĕ", гитлеровецсем хĕснипе, хăйĕн речĕсене йеврейсенчен тасатма тытăннă. 700 çынтан халех 300 çынна членран кăларнă ĕнтĕ. Çавăн пекех „нимĕçсен научнăй ассоциацийĕнчен" те йеврей-профессăрсемпе научнăй работниксене членран кăлараççĕ.

Гитлеровецсем, Чехословаки правителстви килĕшнипе, Чехословакире пурăнакан нимĕçсене ĕçе йарассине те хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Хуçасене халĕ Германи туртса илнĕ районсенче ĕлĕкхи вăхăтра пурăннă гражданасене фашиссен „ĕçлев бÿровĕ" ирĕк памасăр ĕçе илме чарнă. Çакă вăл темиçе пин нимĕç ĕççыннисене фашиссен аллине тытса парассине пĕлтерет (Судет облăçĕнчен тарса тухнисем 20 000 çын ытла шутланаççĕ). Фашисăма хирĕç тăракансем нимĕнле ĕçе те кĕме пултараймаççĕ.

Кундт партийĕ кăларакан хаçатсем Чехословаки правителствине çине тăрсах: Чехословакипе Совет Сойузĕ хушшинчи тунă договăра пăрахăça кăлармала, Испанипе дипломатилĕ çыхăнусем тытассине пĕтерсе лартмала, Лигă нацирен тухма хушса çыраççĕ. (ТАСС).

Чехословакири реакци наступленийĕ

Декабĕрĕн 23-мĕшĕнче Чехословаки министрĕсен кабинечĕ 1933 çулта политикăлă партисене салатса йарасси çинчен йышăннă постановленине çĕнĕрен ĕçе кĕртмеле тунă. Ку саккун хăй вăхăтĕнче генлейновецсене хирĕç пулнă. 1935 çулта çак саккунăн вăйне çухатмала тунă. Халĕ çак саккунпа, коммунистсен партине салатса йарас тата коммунисла депутатсен парламентри мандачĕсене çухатмала тăвас шутпа, каллех тепĕр хут архивран туртса кăларнă.

Çакăнпа пĕрлех, министрсен кабинечĕ Чехословакири нимĕç шкулĕсенче вĕрентекен йеврей преподавателсене вырăнтан кăларса йарасси çинчен решени йышăннă. (ТАСС).

Хроникă

ССРС правителствипе Итали правителстви хушшинче дипломатилĕ калаçусем туса ирттернĕ хыççăн, ССР Сойузĕн Милан хулинчи генеральнăй консульствине, Италин Одессă хулинчи генеральнăй консульствине хупасси çинчен решени йышăннă. (ТАСС).

Франципе Итали хушшинчи килĕшÿсене пăрахăça кăларни

Декабĕрĕн 24-мĕшĕнче Итали правителстви Франци правителствине официалла йĕркепе çапла пĕлтернĕ: 1935 çулта Римра Франципе Итали хушшинче тунă пĕтĕм килĕшÿсене Итали правителстви пăрахăça кăларать, тенĕ.

Килĕшÿсем çине Франци правителствин пуçлăхĕ пулнă Лаваль тата Италин фашисла диктатăрĕ Муссолини алă пуснă. Вăл килĕшÿсем çинче Франципе Итали тĕнчери политика тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕрне тусла пуласси çинчен палăртса хунă пулнă.

Килĕшÿсенчен пĕринче Францине Итали Германине, Австрине, Венгрине, Чехословакине, Польшăна тата Румынине пĕр-пĕрин хушшинчи чикĕсене пăсмала марри çинчен, пĕр-пĕрин шалти ĕçĕсене хутшăнмала марри çинчен килĕшÿсем тума сĕнÿ пама палăртнă пулнă. Кунсăр пуçне тата, Францине Итали Австрин никама пăхăнмасăр пурăнмалли положенийĕшĕн хăрушлăх тухса тăрас пулсан, пĕр-пĕрипе килĕшсе ĕçлесси çинчен договăр туса алă пуснă пулнă.

Йулашки çулсенче пулса иртнĕ событисем вара çак документсен хакĕ мĕнле пулнине пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса пачĕç. Çак килĕшÿсем иккĕшĕ те фашисла агрессăрсен, уйрăмăн илсен, Италин икĕпитлĕхне кăтартакан документсем кăна пулни курăнчĕ. Чăннипе илсе пăхсан, Римра тунă килĕшÿсене фашисла Итали чылай малтанах, Франци правителствине ун çинчен официалла йĕркепе пĕлтериччен, çурса пăрахнă. Итали тÿрремĕх пулăшса тăнипе фашисла Германи Австрине тата Чехословаки территорин чылай пысăк пайне туртса илчĕ, çакăн хыççăн ĕнтĕ Римра тунă документсем иккĕшĕ те чăнах та мăшкăласа кулни пек йанраса илтĕнеççĕ. Англипе Франци дипломачĕсем суйласа илнĕ мухтавсăр çул—фашисла агрессăрсене уступкăсем парас çул —çакăн пек пулма сахал мар пулăшнă.

1935 çулта Римра алă пусса çирĕплетнĕ документсем хушшинче тата тепĕр килĕшÿ пулнă, хальхи вăхăтра ăна та Итали çавăн пекех пăрахăça кăларчĕ. Ку вăл—колонисем пирки тăракан ыйтусем тăрăх тунă договăр. Вăл договăрта Францине Италин йунашарлă колонийĕсен чиккисене палăртса çирĕплетсе хунă пулнă, вăл договăр Франци колонийĕсенче пурăнакан италйанĕцсен положенине йĕркелесе пынă.

Йулашки вăхăтра Италири фашиссем Францине хирĕç чарусăр кампани сарса йанă, çакна шута илсен ĕнтĕ çакă уççăнах курăнса тăрать: Итали правителстви 1935 çулта тунă килĕшÿсене пăрахăç туни вăл пуринчен малтан Итали фашисăмĕ Францин çурçĕр тата çурçĕр-хĕвелтухăç Африкăри колонийĕсене туртса илме ĕмĕтленнипе çыхăнса тăрать. Пурте пĕлеççĕ, Итали фашисăмĕн агрессивлă планĕсем çинче Франци колонийĕсене—Тунисса, Сомалине т. ыттине те туртса илме палăртса хунă.

Тĕнчери хальхи вăхăтра пулса тăнă обстановка хăйĕн захватниклĕ планĕсене пурнăçа кĕртме пуринчен ытла аванрах, тесе шутласа, Итали фашисĕсем çине тăрсах фашисла Германирен пулăшу ыйтаççĕ, мĕншĕн тесен Гитлер Австрине туртса илнĕ чух, Чехословакине çурса таткаланă чух Итали Германине уступкăсем панă, уншăн усăллă ĕçсем тунă. Итали халь ĕнтĕ çав „ĕçсемшĕн тÿлеме" ыйтать. Германири хаçатсем мĕн çырнисем тăрăх пăхсан, çак курăнать: нумайах пулмасть-ха Франципе Германи килĕшÿ турĕç пулсан та, Германи фашисăмĕ Италин захватникле ĕмĕчĕсене ырлать, вĕсемшĕн тăрать.

Фашисла Итали Римри килĕшÿсене пăрахăça кăларни вăл—тÿрремĕх Франципе Англи фашисла агрессăрсем тĕлĕшĕпе капитульантла политика тытса пынинчен тухса тăнă йапала.

Америкăпа Германи хушшинчи хутшăнусем çивĕчленсе пыраççĕ

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен правителстви фашисла Германи тĕлĕшĕпе татăклă позици çине тăнине Америкăри хаçатсенчен нумайĕшĕ ырлаççĕ. Хаçатсем: хальхи вăхăтра Германипе Америкă хушшинчи хутшăнусем çивĕчленсе кайнине пула Германипе Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем хушшинчи дипломатилĕ çыхăнусем татăлас пулсан та, уншăн американĕцсем пăшăрханас çук, тесе çыраççĕ. „Вашингтон Пост" хаçат çапла çырать: Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен татăклă отвечĕ Германин кăмăлне каймасть пулсан, вара вăл „хăйĕн Вашингтонри посольствине хуптар тата хăйĕн посолне чĕнсе илтĕр".

(ТАСС).

Германин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи шпионла организаци

Лондонра пĕлтернĕ тăрăх, Сирире шпионла организацине тупнă. Ку организаци питĕ пысăк пулнă. Шпионла организаци ĕçне темиçе çĕр нимĕç хĕрарăмĕсене хутшăнтарнă, вĕсене фашиссен агенчĕсем, шпионсем, пропагандиссем пулса ĕçлеме Йегипета, Сирине, Ирана, Ирака йанă.

Сирире фашисла ĕçсем туса пынă нимĕçсем Дамаск хулинче „арабсен клубĕ" тытса тăнă. Çак клуб членĕнче вырăнти хăшпĕр пысăк чиновниксем тăнă. Çак „клуб" членĕсенчен пĕрин килĕнче обыск тунă чухне çар хатĕрĕсен складне тупнă, ку хатĕрсене Палестинăна йама хатĕрлесе хунă пулнă.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăç фрончĕ

Леридăпа Балагер хушшинчи сектăрта пăлхавçăсен икĕ роти Сегре йуханшывĕ урлă каçма хăтланса пăхнă, анчах вĕсем пысăк тăкаксем тÿссе кайала, хăйсен позицийĕсем çине чакнă.

Декабĕрĕн 24-мĕшĕнче хĕвелтухăç фронтĕнче интервентсен çарĕсем, авиаципе артиллери тата танксем пулăшнипе, Тремпа тата Серос сектăрĕнче атакăсем тунă.

Италйанĕцсем çапăçăва пит пысăк вăйсем тăратнă пулсан та, вĕсем Сегре йуханшывĕ таврашĕнче кăна хăйсемшĕн каштах усă тунă, анчах уншăн çапăçса интервентсене пит пысăк тăкаксем тума тивнĕ. Алкано, Саррока, Торребесес, Льордеканс патĕнче çапăçусем пыраççĕ. Интервентсем Льордеканс йеннеле уйрăмах хăйар атакăсем тăваççĕ.

Вилнĕ италйанĕцсем хушшинче республикă салтакĕсем Итали полковникĕпе Итали сержанчĕн виллисене тупнă. Тремпа патĕнче çапăçусем пит хăйаррăн пыраççĕ. Республикă çарĕсем унта интервентсен пур атакисене те çĕмĕрсе тăкнă. Республикă авиацийĕ интервентсен çарĕсем пухăннă вырăнсем çине, тăшман патне çĕнĕ вăйсем илсе пыракан грузовиксем çине ăнăçлăн бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Интервентсен темиçе грузовикне пĕтернĕ. Сывлăшра пулса иртнĕ çапăçу вăхăтĕнче республикă авиацийĕ интервентсен темиçе самольотне персе антарнă.

Центрти фронт

Центрти фронтра декабĕрĕн 24-мĕшĕнче пăлхавçăсен артиллерийĕ Мадрид çине персе тăнă, хула çине 600 снарйада йахăн пырса ÿкнĕ.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук. (ТАСС).

— О —

Пăлхавçăсемпе интервентсен наступленине отпор пани

БАРСЕЛОНА, декабĕрĕн 25-мĕш. Пăлхавçăсен хĕвелтухăç фронтĕнчи наступленийĕнче Италин пĕтĕм улттă дивизийĕ, çавăн пекех Италипе Германин нумай самольочĕсем çапăçаççĕ. Фашиссем наступлени тума пит нумай вăхăт хатĕрленнĕ. Анчах республикă çарĕсем те мăнтума кирлине йăлтах тунă.

Ĕнерхи çапăçусенче пăлхавçăсемпе интервентсене пит пысăк тăкаксем кÿнĕ.

(ТАСС).

— О —

Италин Испанири интервенцийĕ

ПАРИЖ, декабĕрĕн 25-мĕш. Еспан агентствин Барселонăри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, декабĕрĕн 23-мĕшĕнче тыткăна илнĕ Итали лейтенанчĕ Делгенипе тата Кармело Жодичелли капрала («Ĕсем Литторио дивизинче службăра пулнă) допрос туса, çакна палăртнă: Испанирен чирлĕ тата аманнă салтаксене вунă пин çын чĕнсе илнĕ хыççăн, Итали çав вăхăтра Испание çĕнĕрен 15 пин салтак йанă.

Тыткăна илнисем: «Ĕнер Испанине Францине Англи влийанине хирĕç çапăçма килнĕ» тенĕ.

(ТАСС).

— О —

Франко генерала вĕлерме тапăннă

ПАРИЖ, декабĕрĕн 25-мĕш. Францири „Се суар" хаçатăн Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх çак кунсенче Авилă çывăхĕнче Испанири фашисла пăлхавçăсен пуçлăхне Франко генерала амантма Франкона Бургосран Авилăна васкавлăн чĕнсе илнĕ пулнă, мĕншĕн тесен Авиларa хула гарнизонĕ восстани çĕкленĕ. Франко автомобил çинче кармаш витĕр иртсе пынă вăхăтра ун çине винтовкăсенчен пенĕ.

(ТАСС).

Решевский Мускавра

Декабĕрĕн 25-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен шахмат вăййин чемпионĕ С. Решевский Мускава çитнĕ. Столицăра вăл темиçе кун хушши пулать, унтан вăл тренировăчнăй турнирта выльăма Ленинграда тухса кайать.

(ТАСС).



Республикăлă Испанире

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çамрăк льотчиксем республикă самольочĕсен ескадрилйи вĕçнине сăнаççĕ.

ТАСС фотохроники.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Йалти партилӗ ӗҫе вӑйлатмала

ВӐРНАР. Районри парторганизацин пухӑвӗнче ПСК(б)П Чӑваш Облӑҫ Комитечӗн иккӗмӗш пленумӗн решенин ҫинчен сӳтсе йавнӑ чухне, вӑл решенире кӑтартнисем Вӑрнар районӗнчи парторганизацине те тивнине палӑртрӗҫ тухса калакан йулташсем. Государствӑ умӗнчи обйазательствӑсене тата финанс планне тултарас ӗҫре район йулса пыраť.

Купла пӗрлех йалта партилӗ ӗҫсене начар туса пыни, парти ӳсӗмӗ уйрӑмӑнах йалта ҫителӗксӗр пыни уҫҫӑн курӑнчӗ. Хуҫалӑхла-политикӑлӑ ӗҫсене вӑхӑтра пурнӑҫласа пымани ҫакӑнтан килет те ӗнтӗ.

Районри пӗтӗм коммунисsenчен йалта 22 процент ҫеҫ шутланаť, пуҫламӗш парторганизацисем йалта 5 тата кандидатсен группи пӗрре анчах. Вӗсенчен Нурӑс, Йершепуҫ тата Уравӑш йалӗсенчи пуҫламӗш парторганизацисенче 1938 ҫулта пӗр ҫынна та парти ретне илмен. Ҫавӑн пекех фосфорит савӑтӗнчи тата Хатӗрлевсен Халӑх Комиссариачӗн районри уполномоченнайӗн кантурӗ ҫумӗнчи организацисенче те ӳсӗм ҫук.

Усӗм пӗтӗм районри парти организацине илсен те начар-ха. 1938 ҫул тӑршшӗнче кандидатсенчен парти членне 24 ҫын илнӗ, парти членӗн кандидатне 34 ҫын тата сочувствуйушчисен группине 22 ҫын ҫеҫ илнӗ.

Вӑрнар районӗнчи парти организацин йалта партилӗ влийанине вӑйлатмала, колхозсенчи лайӑх ҫынсене, пирӗн партие чӗререн парӑнса ӗҫлекенсене парти ретне илес тӗлӗшпе ӗҫлемеле.

Е. В.

Парти членӗн кандидачӗн йатне варлаť

ТРАК. «Майак» колхоз председателӗ Йакӑвлӗв йулташ 1930 ҫултанпа парти кандидатӗнче тӑраť. Анчах вӑл парти член кандидачӗн йатне тивӗҫлӗ тытса пымасť.

Йакӑвлӗв йулташ колхоз председателӗ пулса тӑват-пилӗк ҫул ӗҫлет пулин те, нимӗнле авторитетпа та усӑ курмасť. Ӗҫкӗпе пӑсӑлса кайнӑскер, нимӗнле общественӑлӑ ӗҫе те хутшӑнмасť.

Кӑҫал уйар ҫанталӑк тӑнӑ пулин те, авӑн ҫапас ӗҫе йӗпене хӑварнӑ, 200 лав клевӗр арпине ҫӗртсе йанӑ. Государствӑна пама тийӗсе лартнӑ 12 лав тырӑ 20 кун хушши тӑккаланса ларнӑ, кайран 12 пӑт тухман. Колхозӑн сутмали-илмелисем пулсан, Йакӑвлӗв нихӑҫан та ӗҫкӗсӗр ирттермен.

Иртнӗ ҫул М. Йемелйанӑвӑпа Спиридонӑвӑ колхозницӑсем хӑйсем виҫсе 420 пӑт тырӑ амбара хывнӑ, анчах завхоз нарйад ҫине виҫҫӗр пӑтне ҫеҫ кӳртнӗ пулнӑ. Йемелйанӑвӑпа Спиридонӑвӑ колхозницӑсем ҫине тӑрса тӗрӗслеттерсен тин пытарса хӑварнӑ 120 пӑт тырра тупнӑ.

Пухса кӗртнӗ тырра кӑҫал та лайӑх учота илмен. Кладовщик Хрисанӑвпа Йакӑвлӗв иккӗшӗ пӗр сӑмахлӑ пулса пасарта 5 пӑт тырӑ сутса укҫине ӗҫсе йанӑ.

Йакӑвлӗв хӑйӗн ҫитменлӗхӗсене критиклекен колхозниксене хӗсӗрлесе пурӑннӑ. Е. Иванов йулташ колхозра питӗ активлӑ ӗҫлесе пыраť. Вӑл кӑҫал пӗччен 17 капан тунӑ, ҫӗрулми кӑларнӑ чух икшер нормӑ тултарса пынӑ, хӑй ирӗкӗпе чукунҫул строительствине ӗҫлеме кайнӑ. Анчах ҫак активлӑ колхозника Йакӑвлӗв пуса хутма лаша паман. Тӳрӗ ӗҫлекен ытти колхозниксене те хӑйсен хуҫалӑхӗнчи ӗҫсене тума лаша памасӑр кӳрентернӗ.

Йала тӗлӗшӗнчен пӑсӑлса кайнӑ Йакӑвлӗв хӑйӗн арӑмне те час-часах хӗнет.

Парти райкомӗ унӑн ҫитменлӗхӗсене пӗрре ҫеҫ мар кӑтартса панӑ, йусама тӑрӑшнӑ. Анчах Йакӑвлӗв ҫаплах йусанмасť. Пӑсӑлса кайнӑ Йакӑвлӗв каљҫи парти ретӗнче вырӑн пулмала мар.

Г. Закамский.

Райком ҫекретарӗсемпе инструктӑрсен канашлӑвӗ

Декабрӗн 25-мӗшӗнче, Шупашкарта, ПСК(б)П райкомӗсен виҫҫӗмӗш ҫекретарӗсемпе инструктӑрӗсен республикӑри канашлӑвӗ уҫӑлчӗ. Канашлу партин шалти ӗҫне вӑйлатасси ҫинчен ПСК(б)П Йетӗрне, Патӑрйел райкомӗсен пӗрремӗш ҫекретарӗсен, инструктӑрсене ӗҫре мӗнле пулӑшни ҫинчен Вӑрнар райкомӗн ҫекретарӗн доклачӗсене итлесе сӳтсе йаваť. Кунсӑр пуҫне уйрӑм инструктӑрсем хӑйсен ӗҫӗсем ҫинчен доклад туса параҫҫӗ.

Комитет турӗҫ

Трак районӗнчи „Четай" колхоз ҫумӗнчи комсомол организацинче отчотпа суйлав пухӑвӗ тӗлне 4 комсомолец пулнӑ. Отчотпа суйлав иртнӗ хыҫҫӑн комсомолецсем ҫамрӑксем хушшинче ӗҫлессине уйрӑмӑнах лайӑхлатрӗҫ. Вӗсене общественӑлӑ ӗҫе йавӑҫтарма пуҫларӗҫ.

Халӗ ку организацире 16 комсомолец. ПССЛКС райкомӗ унта комитет тума йышӑнчӗ.

Комсомолецсем „ПСК(б)П историн Кӗске курсне" тимлӗн вӗренме пуҫларӗҫ. Тӑватӑ комсомолец харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренеҫҫӗ, ыттисем валљи кружок организациленӗ.

А. Кисељов.

Ҫамрӑк коммунисcем ӗҫре

Буинскри хӑма ҫуракан савӑтӗнри (Йӗпреҫ р.) 1938 ҫулти апрел уйӑхӗ хыҫҫӑн ПСК(б)П членӗн кандидатне виҫӗ ҫынна, сочувствуйушчисен группине пилӗк ҫынна илнӗ.

Вӗсенчен Вера Константиновӑна тата Анастасийа Турбина йулташсем станок умӗнче стахановла ӗҫлесе нормӑсене 150 процент таран тултарса пыраҫҫӗ.

Дежурнӑй машинист Ваҫилий Зубӑв тата пӑчкӑ хӑйракан Алексей Мозољкин йулташсем те вӗсенчен йулмаҫҫӗ, тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Партие ҫӗнӗрен кӗнисем общественӑлӑ ӗҫре хастарлӑн ӗҫлеҫҫӗ. РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйланӑ вӑхӑтра Мозољкин йулташ округри суйлав комиҫҫи членӗ, Зубӑв йулташ участкӑри суйлав комиҫҫи членӗ пулса активлӑ ӗҫлерӗҫ. Халӗ вӑхӑтра Зубӑвпа Мозољкин йулташсем „ПСК(б)П историн Кӗске курсне" вӗренеҫҫӗ.

Савӑтра ӗҫлекен рабочисемпе служащисен хушшинче политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫсене туса пыма пуҫламӗш парторганизаци агитколлектив организацилленӗ. Агитаторсем кӑнтӑрлахи канура хаҫатсем вуласа параҫҫӗ тата калаҫусем туса ирттереҫҫӗ.

Пуҫламӗш парторганизацин ҫитменлӗхсем те нумай-ха. Савӑтри стена хаҫачӗ сайра-хутра ҫеҫ тухаť. Комсомолецсем тата союзра тӑман ҫамрӑксем хушшинче ӗҫлесси начар тӑраť. Калаҫакан кино аппарачӗ февраљ уйӑхӗнчен вара ӗҫлемесӗр лараť. „ПСК(б)П историн Кӗске курсне" вӗренес ӗҫе кирлӗ пек организацилемен.

П. Бодров.

Интеллигенци пухӑвӗ

Декабрӗн 22-мӗшӗнче Патӑрйелӗнчи педучилищӑра районри интеллигенци пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура 450 ҫын пулчӗ. Парти Обкомӗн агитаципе пропаганда пайӗн инструкторӗ Стољаров йулташ тӗнчери лару-тӑру ҫинчен доклад туса пачӗ.

Пухура ыйту паракансем, тухса калаҫакансем нумай пулчӗҫ.

Л. Павлӑв.

Лайӑх хатӗрленнӗ пропагандиссем кирлӗ

ИШЛЕЙ. Декабрӗн 24-мӗшӗнче комсоргсемпе комитет ҫекретарӗсен районри пухӑвӗ пулса иртрӗ. „ПСК(б)П историн Кӗске курсне" кӑларнӑ май парти пропагандине йӗркелесси ҫинчен" ПСК(б)П Тӗпкомӗ йышӑннӑ постановлени ҫинчен доклад итлесе сӳтсе йаврӗҫ.

Тухса калакан йулташсем вырӑнӗсенче политвӗренӳ ӗҫӗ ҫителӗксӗр пынине палӑртрӗҫ. Уйрӑмӑнах кружоксене йертсе пыма лайӑх хатӗрленнӗ пропагандиссем ҫителӗксӗр. Хӑшпӗр пуҫламӗш организацисем парти историне вӗренесси ирӗклӗ ӗҫ тесе, харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренессине те, кружоксенче вӗренессине те йӗркелемен.

Комсоргсемпе комитет ҫекретарӗсем теорилӗ лекцисем тума ыйтрӗҫ.

Г. Ш.

Йетӗрне районӗнче васкамаҫҫӗ

ЙЕТӖРНЕ. Мӑн Йӗкӗт йалсоветӗ государствӑна ҫӗрулми тӑратассипе районра чи кайри вырӑнта тӑраť. Ҫӗрулми хатӗрлев планне 40 процент анчах тултарнӑ. Мӑн Йӗкӗтри «Хӗрлӗ Октйабӗр» колхоз государствӑна 169 центнӗр ҫӗрулми парас вырӑнне 10 центнӗр ҫеҫ панӑ. Кӗҫӗн Йӗкӗт колхозникӗсем те 103 центнӗр парас чухне 7 центнӗр анчах панӑ. Колхоз председателӗ Баклушкин хӑй те ҫӗрулми пачах паман.

Пырҫырланти Ворошилӑв йачӗпе тӑракан колхозра та государствӑна ҫӗрулми тӑратас ӗҫ йапӑх пыраť. Ҫавна пулах ӗнтӗ тупӑшсене валеҫсе парасси тытӑнса тӑраť.

Йетӗрне районӗнчи колхозсен государствӑ умӗнчи обйазательствӑсене халех тултарса, тупӑшсене ӗҫкунӗсем тӑрӑх колхозниксене валеҫсе парас тӗлӗшпе васкас пулаť.

Т. Йарандайкин.

— О —

Ҫӗре ҫемҫетмелисем пухаҫҫӗ

Трак районӗнчи „Йанмурзина" колхоз тупӑшсене ӗҫкунӗсем тӑрӑх колхозниксене валеҫсе пама тӗплӗн хатӗрленсе ҫитрӗ. Кашни ӗҫкунӗ ҫине виҫшер килограм тӗштырӑ валеҫсе параҫҫӗ. Кӑҫалхи йалхуҫалӑх ҫулӗ колхозра ӑнӑҫлӑн вӗҫленсе пыраť.

Колхозра 6 бригадӑ. Ҫак бригадӑсен ҫитес ҫулти вӑйлӑ тырпулшӑн социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва тата стахановла йухӑмпа сарса пыраҫҫӗ. Йалхуҫалӑх машинӗсене йусас, ҫӗре ҫемҫетмели вырӑнти йапаласем хатӗрлес ӗҫсем хӗрӳллӗн пыраҫҫӗ. Ку вӑхӑтчен 12 плуг йусанӑ, колхозниксен хуҫалӑхӗсем хӑйсен килӗсенче кӗл, тислӗк пухаҫҫӗ.

А. Кисељов.

Вӑрлӑхсене тасатаҫҫӗ


Кӑҫал Вӑрмар районӗнчи Аслӑ Чак колхозӗ тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартас йӗнӗпе иртнӗ ҫулсенчен пӗртте кайа мар ӗҫлерӗ. Тӑрӑшса ӗҫлени ахаљ пулмарӗ, кашни гектартан вӑтам шутпа 13 центнӗр тӗштырӑ пуҫтарса кӗртрӗмӗр. Тырпул вӑйлӑ пулни колхозниксен ӗҫлес хастарлӑхне ӳстерчӗ. Халӗ пур бригадӑсенче те вӑрлӑхсене трийер витӗр кӑларса тасатаҫҫӗ. Хӑшпӗрисем торф кӑларнӑ ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ, унта 1110 лав тислӗк кӑларнӑ. Ҫавӑн пекех кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, кӗл пухассине организациленӗ. 35 колхозник агрокружокра вӗренеҫҫӗ.

В. Анирийанӑв.

Хата-лаборатори пуҫлӑхӗсен курсӗ

Трак райҫӗрӗҫ пайӗ ҫумӗнчи вӑрлӑхсем сӑнакан лаборатори колхозсенчи хата-лаборатори пуҫлӑхӗсен виҫӗ кунлӑх курсне ирттерчӗ. Курсра 13 ҫын вӗренчӗҫ.

И. Х.



Мускаври Сталин йачӗпе тӑракан автосавӑтри рабочисемпе служащисен ачисем тата Пролетарски районри шкулсенче вӗренекенсем автосавӑтӑн ачасен клубӗ ҫумӗнче тинӗс-ҫар ӗҫне вӗренеҫҫӗ.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Ҫамрӑк морйаксен ушкӑнӗ.

Д. Фавилович фото-ӳкерчӗкӗ (Бюро-клише ТАСС).

„Кӑканар" колхоза пулӑшу кирлӗ

Ҫӗрпӳ районӗнчи „Кӑканар" колхоз иртнӗ ҫулсенче йалхуҫалӑх ӗҫӗсемпе йалсоветра, ҫавнашкалах районра малта пыракан колхозсенчен пӗри шутланса тӑраччӗ. Кӑҫал колхоз пур ӗҫсемпе те кайа йулса пычӗ. Йалта кульҭурӑлӑ вӑй пысӑк: учительсем—5 ҫын, вӗсем пурте „Кӑканар" колхоз членӗсем, комсомол организацинче 10 ҫын, пӗр коммунис. Ҫакнашкал вӑйпа колхоза пур йенчен те лайӑх ӗҫлекен тума май пур.

Колхоза йертсе пыракансем хӑйсене шанса панӑ пысӑк ӗҫсене кирлӗ пек туса пымаҫҫӗ. Ҫавна пулах ӗнтӗ колхоз ку вӑхӑтченех государствӑ умӗнчи обйазательствӑсене тултарман. 80 центнӗр ҫӗрулми парас вырӑнне 28 центнӗр анчах панӑ. Ҫавнашкалах государствӑна тырпул тӑратас, сӳс-кантӑр, пахча-ҫимӗҫсем, аш-какай парас плансене тултарман.

Лаша вити тума пуҫлани виҫӗ ҫул ҫитет, ӑна кӑҫал та туса пӗтереймерӗҫ. Ҫавӑнпа чылай лашасем сивӗ ҫӗртех тӑраҫҫӗ. Ҫитменнине тата вӗсене начар пӑхаҫҫӗ. Колхозра сурӑх ферми пур. Фермӑри ӗҫсене те йӗркелемен. Чирлӗ такасене уйрӑм тытса усрамаҫҫӗ. Ҫавна май ҫуллахи вӑхӑтра сурӑхсем вилнӗ. Фермӑ пуҫлӑхӗ Т. Григорйӗв сӑтӑрла ӗҫлени уҫҫӑнах курӑнаť. Фермӑ выљӑх-чӗрлӗх ӗрчетмели кӑҫалхи плана тултарман. Колхозниксем выљӑх апачӗсене итем ҫинчен никамран ыйтса тӑмасӑрах йӑтаҫҫӗ. Лаша кӳлмели хатӗрсем ҫитмеҫҫӗ.

„Кӑканар" колхоз ҫитес ҫулти вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешме тытӑнман. Йалхуҫалӑх машинӗсене ҫуллахи вӑхӑтра йӑста хунӑ, ҫавӑнтах выртаҫҫӗ. Вӗсене йусама тытӑнман. Вӑрлӑхсене суртламаҫҫӗ, ҫӗре ҫемҫетмели вырӑнти йапаласене хатӗрлемеҫҫӗ.

Йулашкинчен ревизи комиҫҫи ҫинчен. Колхозсенчи ревизи комиҫҫисен, колхозри ӗҫсене тӑтӑшах тӗрӗслесе, ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтерме тӑрӑшмала. Анчах, „Кӑканар" колхозра виҫҫӗмӗш кварталта та, тӑваттӑмӗш кварталта та ревизи туса ирттермен. Ҫавӑн пирки колхозра пысӑк ҫитменлӗхсем пулса пыраҫҫӗ.

„Кӑканар" колхоз пур ӗҫсемпе те малта пыракан колхоз пулма пултараť. Ӑна ӗҫре райҫӗрӗҫ пайӗ тата районри организацисем йенчен пулӑшса, йертсе пыни кирлӗ.

В. Фомич.

Патефонсем, гармоњсем, велосипедсем туйанаҫҫӗ

ЙЕТӖРНЕ. „Ленин хушуӗ" тата Кирӑв йачӗпе тӑракан колхозсен членӗсем пуйан та кульҭурӑлӑ пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем лавккасенчен кульҭурӑ таварӗсем нумай ыйтаҫҫӗ. Ҫак ернере кӑна „Ленин хушуӗ" колхоз членӗсем 7 патефон, 2 гармоњ туйанчӗҫ. Кирӑв колхоз членӗсем 4 патефон, 4 велосипед туйанчӗҫ.

Й. Обйездчикӑв.

Колхозра пӗр-пӗрне пулӑшакан кассӑ

Кӗтеснер (Вӑрмар р.) колхозӗнчи пӗр-пӗрне пулӑшакан кассӑра 305 колхозник члента тӑраť. Кассӑра 1.214 тенкӗ укҫа, 913 пӑт тырӑ пулнӑ.

Ҫак ҫулта тӑхӑр колхозника ҫӗнӗ пӳрт лартма, ватӑлнипе ӗҫлейми пулнӑ вунӑ колхозник тата виҫӗ красноармеец ҫемйине пулӑшу панӑ, виҫӗ колхозника курорта кайма пулӑшнӑ.

В. С. Алендейӗв.

Ф. ОЛЕШЧУК

„Христос ҫуралнӑ" йатпа тӑвакан праҫник камшӑн кирлӗ

Христиансем, христос тӗнне тытакансем, ҫулсеренех хӑйсен чи пысӑк праҫникӗсенчен пӗрне—христос ҫуралнин праҫникне, раштав праҫникне туса ирттереҫҫӗ. Попсем улталанӑ ҫынсем ҫакна ӗненеҫҫӗ: 2 пин ҫула йахӑн ӗлӗкрех Палестинӑра Марийа йатлӗ хӗртен „турӑ ывӑлӗ"—Иисус христос ҫуралнӑ имӗш.

Анчах христос тени шухӑшласа кӑларнӑ йапала иккенне наукӑ тахҫанах ӗнентерӳллӗн кӑтартса панӑ. Иисус христос чӑн пурнӑҫра нихӑҫанта пулман. Йевангелисем ҫинче христос ҫинчен каланисен ултавне наукӑ тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ. Наукӑ ҫакна ӗнентерӳлӗн кӑтартса панӑ: пӗррӗмӗшӗнчен, тӗрлӗ ҫынсем ҫырса хатӗрленӗ тӗрлӗ йевангелисенче пит нумай хирӗҫлӗхсем, ҫыпӑҫусӑр вырӑнсем пур, вӗсем тӗрлӗрен каласа параҫҫӗ; иккӗмӗшӗнчен, йевангелисене христос пурӑннӑ текен вӑхӑт иртсен нумай кайран ҫырнӑ; христос ҫуралнин праҫникне хӑйне те IV-мӗш ӗмӗрте тин пуҫласа йанӑ.

Христос пурӑннӑ текен вӑхӑтри учонӑйсенчен пӗри те христос ҫинчен пӗр йӗрке те ҫырман. Христос чӑнах та пулнӑ, пурӑннӑ пулсан, унӑн пурнӑҫӗнче йевангелисенче ҫырса кӑтартнӑ халиччен ҫын курман тӗлӗнмеле паллӑ ӗҫсем пулса пынӑ пулсан, ниушлӗ вӑл вӑхӑтра пурӑннӑ учонӑй-историксем, етемлӗх валљи хӑйсен ӗҫӗсене ҫырса хӑварнӑскерсем, христос ҫинчен ҫырса хӑварман пулӗччӗҫ? Христос пулман пулсан вара, вӑл ҫурални те пулман, христиансен чиркӗвӗ ҫулсеренех праҫник туса чыслакан христос ҫуралнӑ кун та пулман.

Христоса ӗненесси ӑҫтан пуҫланса кайнӑ?

Кирек мӗнле тӗн (религи), ҫав шутрах христианствӑ, пуҫланса аталанса кайни те обществӑ устройстви мӗнле пулнинчен, ҫынсен общественӑлӑ-економикӑлӑ пурнӑҫӗ мӗнле пулнинчен килет. Ҫапла вӗрентет пире марксисӑм-ленинисӑм. Ӑна ҫавӑн пек ӑнлантарса пани кӑна чӑн-чӑн наукӑлӑ ӑнлантарса пани пулса тӑраť.

„...Общественӑн духовнӑй пурнӑҫӗ йӗркеленсе пынин ҫӑлкуҫне, общественӑлӑ идейӑсем, общественӑлӑ теорисем, политикӑлӑ шухӑшсем, политикӑлӑ учреждениiсем пуҫланса кайнин ҫӑлкуҫне идейӑсенче, теорисенче, шухӑшсенче, политикӑлӑ учреждениiсенче хӑйсенче мар шырамала, ӑна общественӑн материаљнӑй пурнӑҫ условийӗсенче, общественӑлӑ бытийере шырамала, идейӑсем, теорисем, шухӑшсем тата ыттисем те общественӑн материаљнӑй пурнӑҫӗн, общественӑлӑ бытийен санне кӑтартса тӑракани пулаҫҫӗ" *).

*) „Краткий курс истории ВКП(б)", стр. 110, Госполитиздат, 1938.

Христианствӑ 2 пин ҫула йахӑн ӗлӗкрех Рим империнче пуҫланса кайнӑ. Рим империн економики чурана ӗҫ ҫинче тытӑнса тӑнӑ. Унта пурӑннӑ ҫынсенчен ҫуррийӗ, 60 мӗлйуна йахӑн ҫын, чурасем пулнӑ.

Чурасем рабовладелецсен (чурасен хуҫисен) пусмӑрне хирӗҫ пӗрхут ҫеҫ мар восстанисем ҫӗкленӗ. Истори христос тӗнӗ пуҫланиччен 136 ҫулта Сицилири чурасем восстани тунине, христос тӗнӗ пуҫланиччен 73 ҫулта Италире чурасем Спартак йертсе пынипе восстани тунине тата ытти восстанисем пулнине пӗлет. Хӑйсем организациленмен пулнипе чурасем експлоататӑрсен пусмӑрне сирпӗтсе антарма пултараймаи. Чурасен пур восстанийӗсене те йун айне туса путарса лартнӑ.

Ҫак тапхӑрта ӗнтӗ христианствӑ, христос тӗнӗ сиксе тухаť, вӑл чурасене хӑйне май вӗрентме тытӑнаť, вӗсене ҫӑлӑнӑҫ тата тӳрӗлӗхлӗ пурнӑҫ пама пулаť, анчах... „леш тӗнчере", урӑхла каласан, вилнӗ хыҫҫӑн кӑна.

Тискер експлоатаци пусмӑрӗ ҫапса хӗснӗ чурасем христианствӑна ӗненекенсем, ун хыҫҫӑн кайакансем пулса тӑнӑ. Христианла тӗн чурасене уҫҫи-хупписӗр йӑвӑр пурнӑҫран тухмали май пек туйӑнакан суйа, ултавлӑ ҫул кӑтартса параť. Анчах чӑннипе илсен вӑл тӗн ӗҫҫыннисен тата та ытларах йӑвӑр пурнӑҫне ҫирӗплетет.

Христианствӑн ҫак роље рабовладелецсем питӗ те лайӑх пӗлсе шута илнӗ. 324 ҫулта Рим императорӗ Константин христианствӑ государствӑ тӗнӗ пулса тӑраť, тесе пӗлтернӗ, 354 ҫулта официаллӑ йӗркепех вара раштав праҫникӗ тумала тӑваҫҫӗ.

Нумай ҫӗре сарса йанӑ, вӑйлӑ чиркӳлӗ организаци туса хунӑ, вӑл пулӑшнипе императӑр влаҫне тӗреклетнӗ. Чиркӳ политикӑлӑ вӑй пулса тӑнӑ, ҫав вӑхӑтра унӑн общественӑн економикӑлӑ аталанӑвӗнчи ролӗ пит пысӑк пулнӑ.

Рабовладелецла йӗрке вырӑнне феодаљнӑй йӗрке тухса тӑнӑ. Феодализӑм тапхӑрӗнче тӗп вырӑнта тӑракан икӗ сослови—помещиксем-феодалсем тата духовенствӑ—пуҫ пулса тӑракан сословисем пулнӑ. Крепостной хресченсем хӑйсен пусмӑрҫисене хирӗҫ пӗрхут ҫеҫ мар восстани ҫӗкленӗ, анчах, ҫак кӗрешӳре хӑйсем вӑйсӑр пулнипе, вӗсем шанчӑка турӑ ҫине, тӗн ҫине хывнӑ. Тӗн вара, йаланхи пекех, експлоататӑрсене пулӑшса тӑнӑ.

Попсем: помещиксен-феодалсен влаҫӗ—турӑран килет текен идейӑна, духовенствӑ—ҫак аскӑн та ҫӑткӑн попсемпе йепискӑпсем—турӑн ҫӗр ҫинчи представителӗ пулса тӑраť, текен идейӑна ҫине тӑрсах ӗҫҫыннисен ӑс-тӑнне кӗртсе пынӑ.

Феодаљнӑй обществӑ вырӑнне капиталисла обществӑ тухса тӑнӑ. Феодалла експлоатаци вырӑнне капиталисӑмла експлоатаци тухса тӑнӑ. Ӗҫ вӑйӗ тавар пулса тӑнӑ.

Попсем ӗҫҫыннисене: класлӑ кӗрешӳ ҫылӑхлӑ ӗҫ, класлӑ тӑшмансемпе мирлӗ пурӑнни кирлӗ, тесе ӗнентерес шутпа пур майсемпе те усӑ курма тӑрӑшнӑ тата халь те тӑрӑшаҫҫӗ. Христианла тӗн тата унӑн праҫникӗсем ҫӗнӗ експлоататӑрсем — капиталиссем пуҫ пулса тӑрассин хӗҫпӑшалӗ пулса тӑнӑ.

„Христианствӑн социаљнӑй принципӗсем,—тесе ҫыраť Маркс,—античнӑй чуралӑха тӳрре кӑларчӗҫ, вӑтам ӗмӗрти крепостничествӑна ҫӳле ҫӗклесе йачӗҫ тата ҫавӑн пекех пролетариата кунчухне пусмӑрласа тӑрассине, мӗскӗн гримасӑпа пулин те, кирлӗ тӗлсенче хӳтӗлеме пӗлеҫҫӗ".

«Ҫӗр ҫинче мир, ҫынсем хушшинче ырӑлӑх»

Раштав кунӗсенче пӗтӗм ҫӗршывсенче, пӗтӗм чиркӳсемпе кӗлӗ сурчӗсенче попсемпе ҫектантсем класлӑ тӗнче идейине вӑйлӑн паллӑ тӑваҫҫӗ. Вӗсем ӗҫҫыннисене хӑйсен класлӑ тӑшмансене йуратма чӗнеҫҫӗ. Вӗсем: „Ҫӳлти турра мухтав, ҫӗр ҫинче мир, ҫынсен хушшинче ырӑлӑх" тесе кӑшкӑраҫҫӗ.

Анчах експлоататӑрла обществӑра, тӳрӗлӗхе таптаса тӑракан ҫынсен пӗр пайӗ тепӗр пайне пусмӑрлани ҫинче тытӑнса тӑракан обществӑра мир пулма пултараť-и вара?

Христианла чиркӳ хӑйех ӗнтӗ хӑйӗн пӗтӗм историйӗ тӑршшӗнче вӗҫӗ-хӗррисӗр хирӗҫӳсен, йунлӑ вӑрҫӑсен, ҫынна ҫын етемле мар пӗтернисен организаторӗ, вӑл тискер ӗҫсене хавхалантарса пыракане пулнӑ.

Акгли писателӗ Свифт ҫапла каланӑ: тӗн вӑрҫисемпе тытӑҫӑвӗсенче ҫунтарса йанӑ ҫынсен кӗлӗ пӗр ҫӗре пухас пулсан, вӑл кӗлрен Йевропӑри чи ҫӳлӗ сӑртран, Монблонран пӗчӗккӗ мар сӑрт пулса тӑнӑ пулӗччӗ, тенӗ.

Тӗн тӗлӗшпе хӗсӗрленисем, тӗн вӑрҫисем йаланах калама ҫук тискер те хаяр пулнӑ. 1209 ҫулта римски папӑн ҫарӗсем «йеретиклӗ» Безйер хулине ҫӗмӗрсе кӗрсен, отрйадсен начаљникӗсем папӑран «Йеретиксене католиксенчен мӗнле палласа уйӑрса илмеле?» тесе ыйтнӑ. Вара папӑ: «Вӗлерӗр пурне те. Ӗненекеннисемпе ӗненменнисене леш тӗнчере турӑ палласа илӗ», тесе ответ панӑ.

Инквизици тени уйрӑмах етемле мар тискер те хаяр пулнӑ. Вӑл инквизици ҫур мӗлйун ҫынна йахӑн пӗтернӗ. Кӑшт ҫеҫ шанчӑксӑр пек туйӑннӑ чухне те чиркӳсен сучӗсем ҫынсене ҫунтарнӑ, вӗлернӗ, вӗсен чӗлхисене тӑпӑлтарса кӑларнӑ, куҫӗсене чава-чава кӑларнӑ, вӗсене чи хӑрушӑ асапсем кӑтартнӑ.

Инквизици пӗтернӗ ҫынсен шутӗнче наукӑн аслӑ деятелӗсем те сахал мар пулнӑ. 1600 ҫулта турра ӗненменшӗн айӑпласа генилӗ учонӑйа Джордано Брунона ҫунтарса йанӑ. 1619 ҫулта чиркӳ Ључилио Ванинине, Джордано Бруно вӗрентӗвӗшӗн тӑнӑ ҫынсенчен пӗрне, ҫунтарса йанӑ. 1642 ҫулта 78 ҫула ҫитнӗ аслӑ Галилей пӗтнӗ, ӑна тӗнче ҫине наукӑла пӑхнӑшӑн тӗрмере лартса, асаплантарса халран йанӑ.

1572 ҫулта августӑн 24-мӗш тенӗ чух ҫӗрле Франци столицинче католиксем протестантсене 20 пин ҫынна вӗлерсе тухнӑ. Ҫынсене ҫапла тискеррӗн вӗлерни историйе Варфоломейӗвски каҫ йатпа кӗнӗ. Римски папӑ ҫакӑ «турӑшӑн кӑмӑллӑ ӗҫе» чысласа медаљ ҫактарса кӑларнӑ, Рима тата ытти хуласене

Ӗҫҫыннисем пурте пӗр шухӑшлӑ пулса ыйтаҫҫӗ: тӳрӗ, тӑрӑшса ӗҫлекенсене хавхалантармала, летунсене тата прогуљшчиксене хирӗҫ ҫирӗппӗн кӗрешмеле!

ӖҪ ДИСЦИПЛИНИ ПИРКИ

ИШЛЕЙ. Районра чылай учрежденисенче, ялсоветсенче, колхозсенче ӗҫ дисциплинине йӑпӑхтарни палӑрать. Профсоюз организацисем ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетес тӗлӗшпе начар ӗҫлеҫҫӗ.

Социализмлӑ ӗҫ дисциплинине йӗркелес тӗлӗшпе ялсоветсене, колхозсене ырӑ тӗслӗх кӑтартас вырӑнне, районри учрежденисем ҫак тӗлӗшпе хӑйсем икӗ урипех уксахлаҫҫӗ. Райҫутӗҫ пайӗнче дисциплинӑ питех те япӑх. Хӑшпӗрисем ӗҫе ирхине 10 сехетре пыраҫҫӗ те кӑнтӑрла иртсен 3 сехетре киле тухса каяҫҫӗ. Ҫавӑн пекех районри типографинче те ӗҫ дисциплини ҫук. Типографин бухгалтӗрӗ канцељарине кӑнтӑрла ӗҫлеме пымасть, каҫхине пӗр-ик сехет ӗҫленипех ӗҫ укҫи илет. Директӑрӗ Вахторкин яла тӗлӗшӗнчен пӑсӑлса кайнӑ.

Ишлейри столовӑя ирхине вӑхӑтра уҫмаҫҫӗ. Учрежденире ӗҫлекенсем чылайӗшӗ столовӑйра апатланаҫҫӗ, заљатине вӑхӑтра ҫитеймеҫҫӗ.

Ишлейри ялпо лавкисенче те дисциплинӑ ҫук. Продавецсем хӑйсем суту-илӳ мӗнле тӑвас тесҫӗ, ҫавӑн пек ӗҫлеҫҫӗ. Ишлей ялпо правленин председателӗ Пардасӑв юлташ ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетессишӗн тӑрӑшмасть. Профсоюз организаци те ялпо работникӗсем хушшинче ӗҫ дисциплинине лайӑхлатас пирки нимӗн те хускалмасть.

Ялсоветсемпе колхозсенче ӗҫ дисциплинийӗ питех те начар. Ишлей Покровски ялсовечӗн председателӗ Сидав, ҫекретарӗ Могалов юлташсем пасар кун канцељаринче пулмаҫҫӗ.

Ямайкасси ялсоветне кӗрекен Потемкин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ И. Иванов икӗ эрне хушши колхоз правленин канцељарине пырса курман. Колхоз правленинче ӗҫлекенсем ӗҫ дисциплинине пӑсинпе ӗнтӗ Потемкин ячӗпе тӑракан колхоз пур ӗҫре те кая юлса пырать. Государствӑна кайала таварсе памали тырӑна 10 центнер тӳлесе татман. 1938 ҫулти тупӑша валеҫесси ҫинчен шутламаҫҫӗ те.

Учрежденисенче, ялсоветсенче, колхозсенче ӗҫ дисциплинине йӗркелемени умра тӑракан ӗҫсене вӑхӑтра туса пыма чӑрмантарать. Социализмлӑ ҫӗршывра ӗҫ дисциплинине пӑсин пулмала мар.

Гер. Шчербаков.

Ӗҫ вӑхӑчӗн растратчикӗсем

Юлашки вӑхӑтра предприятисенчи тата учрежденисенчи рабочисемпе служащисем хаҫатсенче ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетес ыйтупа нумай ҫыраҫҫӗ. Прогуљщиксемпе летунсем производствӑна сиен кӳни ҫинчен ҫыраҫҫӗ вӗсем.

Чӑнах та, предприятисемпе учрежденисенче укҫашӑн анчах ӗҫлекенсем те пур-ха. Акӑ, сӑмахран, Трак райҫутӗҫ пайӗнче ӗҫ дисциплини питех те сӳрӗк. Райҫутӗҫ пайӗн заведующийӗ Гурьев юлташ хӑй те ӗҫе ирхине 10—11 сехетре ҫеҫ пырать. Шкул ҫулне ҫитмен ачасен инспекторӗ Захарӑвӑ нихӑҫан та ӗҫе вӑхӑтра тухман. Вӑл ӗҫе пырсан та вӑхӑта ӗҫлемесӗр иртерет. Виҫӗ сехет ҫитнӗ ҫитменех тухса кайать. Унпа пӗрле ӗҫлекенсем те ӗҫ дисциплинине ҫирӗппӗн пӑхӑнса ӗҫлемеҫҫӗ.

Райҫутӗҫ пайӗ сӳрӗк ӗҫленине пулах районра халӑха вӗрентес ӗҫ питӗ япӑх пырать. 1938—39 вӗренӳ ҫулӗнче районра шкула кайма ҫул ҫитнӗ ачасем пурӗ 280 ача шкул тулашне юлнӑ. Ҫакӑн ҫинчен сигналсем пулнӑ пулсан та райҫутӗҫ пайӗ вӑл ҫитменлӗхе пӗтерес тӗлӗшпе татӑклӑ ӗҫсем туман.

Районта хут сахал пӗлекенсем 1400 ҫын, хут пӗлменнисем 810 ҫын шутланаҫҫӗ. Анчах вӗсене вӗрентес тӗлӗшпе ӗҫлени вырӑнсенче ҫук-ха.

Районти Сывлӑха сыхлав пайӗнче те райҫутӗҫ пайӗнчи йеверлех. Унта ӗҫе 10—11 сехетсенче тин килеҫҫӗ. Анчах райӗҫтӑвком председателӗ тата профсоюз организацийӗсем ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетессишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ.

Государствӑ учрежденийӗсенче ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетмеле. Ҫавна тума ӗҫ вӑхӑчӗн растратчикӗсене хирӗҫ вӑйлӑ кӗрешӳ пуҫарни кирлӗ.

Ив. Хатаевский.

ҪУР КУН ДНЕВНИКӖ

Декабӗрӗн 25-мӗш. Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарначӗ. Тӑхӑр сехет ҫитесси нисе мар. Леонтьев юлташ черетлӗ политинформаци тӑвать. Паянхи политинформацири тӗп ыйтусем—ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ „Ӗҫлев кӗнекисем памала тӑвасси ҫинчен" йышӑннӑ постановлени тата юлашки вӑхӑтра хаҫатсем ҫинче рабочисемпе служащисем прогуљщиксемпе летунсем пирки пана сӗнӳсем. Ҫакӑнтан—дисциплинӑ.

Тӑхӑр сехет. Политинформаци пӗтрӗ.

* * *

Служащисем пӳлӗмӗсене саланчӗҫ. 9 сехет те 05 минут. Ӗҫлекенсем хӑйсен вырӑнӗнче мар. Сӗтелӗсем ҫинче портфелӗсем. Пуканӗсем пушӑ. Пӳлӗмрен пӳлӗме, тротуарти пек, халӑх утать.

— Чернил ҫук-ха манӑн. Чернил...—Паян, ӗнерхинчен, сивӗ.—Ну, вара ӗнер пӗр мыскара пулчӗ...

9 сехет те 15 минут. Ачасен ҫурчӗсем йенӗпе ӗҫлекен Роженцӗв чернил тултарса килсе ӗҫлеме ларчӗ.

* * *

Халӗ епӗр Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗн шкулсен управленийӗнче. Кунта ӗҫлекенсенчен—Ф. Пиуљскайа—вӑтам шкулсен управленийӗн ҫекретарӗ; Л. Смоленковӑ—кадрсен инструкторӗ; Николайӗвӑ—учебниксем кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен ӑслалӑх сотрудникӗ; Артемйӗв—разъездной инспектӑр т. ыт. те.

Пирӗн дневникре—Ф. Пиуљскайа, Л. Смоленковӑ.

* * *

9 сехет те 17 минут. Дневникри ҫынсем халтерех кӑна сӗтел хушшине кӗрсе ларчӗҫ.

9 сехет те 20 минут. Пиуљскайа хӑйӗнпе юнашар тепӗр сӗтел хушшинче ларакан Смоленковӑпа „ӗнерхи пулни-иртнисем" ҫинчен калаҫу пуҫлать. Калаҫу 10 минут хушши тӑсӑлать. Ун хыҫҫӑн юнашар пӳлӗме тухать, 3 минут иртет. Пырса кӗрет. Умӗнче выртакан хутсене илсе вулать. Вӑл хутсенчен пӗри—Шуљбин юлташ ҫырӑвӗ. Пӑрачкав районӗнчен ҫырать, нимӗҫ чӗлхине вӗрентмели программӑ ыйтать. Вӑл ҫырӑва тепӗр хут пурне те илтӗмелле вуласа парать. Юнашар пӳлӗме тухса кӗрет.

— Ҫук, терӗҫ, пирӗн ун пек программӑ...

Ҫырӑва малтанхи вырӑна хурать. Смоленковӑпа иккӗшӗн тепӗр хут калаҫу пуҫланать. 10 сехет ҫитет. 10 минут хушши темӗн ҫырать.

10 сехет те 14 минут. Смоленковӑ патне пырса стена ҫумне тайӑнса тӑрать. Виҫӗ минутран хӑйӗн пуканӗ ҫине пырса ларать. Пӗрер минут иртсен шкап умне пырса темӗнле папкӑсем турта-турта кӑларать. Темиҫе хут пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна илсе хурать. Нимӗн те тупаймасть. Каллех малтанхи вырӑна иле-иле хурать. Шкап патӗнчен уйӑрӑлса тулала тухать. 10 сехет те 23 минутра пӳлӗме кӗрет.

— Ой, питӗ сивӗ...

10 сехет те 24 минут. Пукан ҫине ларать. Кашт тӑрсан малтанхи хутсене тепӗр хут тыта-тыта пӑхать. 10 сехет те 26 минут. Юнашар пӳлӗме тухать. Унтан пырса кӗрсен каллех малтанхи хутсене иле-иле пӑхса ларать.

10 сехет те 36 минут. Нимӗн тумасӑр таврара калаҫакансене итлесе ларма тытӑнать.

10 сехет те 42 минутра конвертсем тума тытӑнать. Тепӗр виҫӗ минутран юнашар пӳлӗме тухать. Часах кӗрет. 10 сехет те 49 минутра Смоленковӑпа каллех калаҫу пуҫланать.

Калаҫу 10 сехет те 52 минутра пӗтет.

11 сехет те 23 минут. Ку вӑхӑтчен Пиуљскайа тата икӗ хут юнашар пӳлӗме тухса кӗрет. Смоленковӑпа 5 минут хушши калаҫу тӑвать.

11 сехет те 28 минут. Чей тата булкӑ илсе кӗчӗҫ. Ҫур сехет хушши чей ӗҫрӗҫ. Вӑл вӑхӑтра 6 минут хушши районтан телефонограммӑ йышӑнать.

12 сехет. Звонок. Сӗтел ҫине шӑлса пуҫтарать. 12 сехет те 11 минут. Перерыв тума тухса кайать.

12 сехет те 30 минут. Ӗҫе кӗме звонок. 12 сехет те 50 минут Пиуљскайа перерывран таврӑнчӗ.

* * *

Ку дневнике, Смоленковӑ пирки, малала тӑсма та кирлӗ мар пулӗ тетпӗр. Ҫав ҫавах, унӑн ӗҫ дневникӗ те Пиуљскайа дневникӗнчен уйрӑм мар. Смоленковӑ ӗҫе шкапра хутсем шырани тата юнашар пӳлӗмне усӑсӑр тухса-тухса кӗни урӑх минутсенче пулса иртнипе кӑна уйӑрӑлса тӑрать.

* * *

Ӗҫӗн ҫур кунӗ иртрӗ. Епӗр тухса килнӗ чухне Смоленковӑпа Пиуљскайа умӗнче иртенпе тӑракан хутсем пӗр ҫив вырӑнтан тапранмасӑр, ҫавӑн хулӑмӗшех юлчӗҫ. Унта—ҫырусем, ыйтусем, заявленисем—паянах ответ памаласкерсем.

Ив. Мосейӗв.

Прогуљшчиксемпе летунсене ачашлаҫҫӗ

КАНАШ. Сӗтел-пукансем тӑвакан хапрӑкра летунсемпе прогуљшчиксене, рвачсене хирӗҫ кӗрешес вырӑнне, вӗсене ачашласа усраҫҫӗ. Ҫакӑнпа кунта прогулсем тӑвакансен хисепӗ ӳсе пырать.

Декабӗр уйӑхӗнче стољар Саљникӑв икӗ кун ӗҫе тухман. Нумай чухне вӑл ӗҫе вӑхӑтра тухмасть. Ҫавӑн пекех полировкӑллӑ цехра ӗҫлекен Митрофанӑвӑ та виҫӗ кун прогул тунӑ. Анчах вӗсем пирки нимӗн те туман.

Хӑшпӗрисем производствӑна малала ярассишӗн мар, государствӑ укҫине ытларах илесшӗн кӑна тӑрӑшаҫҫӗ. Работница Козловӑ ҫак уйӑхра хӑй ирӗкӗпех ӗҫрен тухса кайнӑ. Икӗ эрне иртнӗ хыҫҫӑн хапрӑка кайала пырса кӗнӗ те: „Епӗ чирлесе выртрӑм, мана укҫа тӳлӗр", тесе ыйтма пуҫланӑ. Тӗрӗслесе пӑхнӑ хыҫҫӑн вӑл килтех пурӑнни палӑрнӑ. Ҫак прогуљщицӑ та хапрӑкрах ӗҫлет-ха.

Хапрӑкра ҫак уйӑхри ҫирӗм кун хушшинче 21 ҫын прогулсем тунӑ. Ӗҫе ӳсӗр пуҫпа тухнисем те час-часах пулаҫҫӗ.

Хапрӑкра тӳрӗ ӗҫлекенсем, стахановецсемпе ударниксем сахал мар. Вӗсем государствӑ паракан пулӑшусемпе прогуљщиксемпе летунсенчен ытларах усӑ курма тивӗҫлӗ. Анчах кунашкал уйрӑмлӑх ҫук-ха кунта. Ӗҫ дисциплинине пӑсакансем лайӑх ӗҫлекенсемпе пӗр хисепрех. Кунашкал йӗркене халех улӑштармала.

Ст. Филиппӑв.

Савӑт ҫурчӗсем летунсене вырӑн мар

Ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетес тӗлӗшпе рабочисемпе служащисем паракан сӗнӳсене епӗ пӗтӗмпех ырлатӑп. Мӗншӗн тесен, дисциплинӑна ҫирӗп тытса пыни хамӑрӑн предприятисенче, учрежденисенче йӗркелӗх тума, хамӑрӑн ӗҫе лайӑхлатма май парать.

Предприятисемпе учрежденисенче ӗҫ дисциплинине ҫирӗппӗн тытса пымала тӑвас тесен, производствӑ дезорганизаторӗсене—прогуљщиксене, летунсене, рвачсене хирӗҫ вӑйлӑ кӗрешӳ пуҫламала. Халӗхи вӑхӑтра вӑл кӗрешӳ тивӗҫлӗн пымасть. Ҫавна пула летунсемпе прогуљщиксем час-часах государствӑ укҫине тивӗҫсӗр илеҫҫӗ, предприяти паракан пулӑшусемпе усӑ кураҫҫӗ.

Пирӗн Шупашкарти тир-сӗран комбинатне 1937 ҫулти январӗн 1-мӗшӗнче Данилӑв ӗҫе килсе кӗнӗ. Вӑл 7 уйӑх хушши ӗҫленӗ хыҫҫӑн ӗҫрен тухса кайрӗ. Ҫавӑн пекех Звершинӑ та май уйӑхӗнче ӗҫрен тухса кайнӑ. Вӗсем иккӗшӗ халӗ те комбинатӑн лайӑх хватерӗсенче пурӑнаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах, комбинатра тӳрӗ ӗҫлекенсенчен хватерсӗр пурӑнакансем те пур. Тӗрӗс мар ку йӗрке. Предприятире ӗҫлемен ҫынсем, вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳрекен летунсем савӑт ҫурчӗсенче пурӑнма тивӗҫлӗ мар.

И. Феодӑрӑв.
Економист-статистик.

Тӗрӗсленсе килнӗ заметкӑсем

Суйа счетсемпе

Вӑрманкасри (Елӗк р.) „Труд" колхоз председателӗ Степанӑв 1937 ҫулта Горькине командировка кайса автомашинӑ пайӗсем илсе килнӗ. Государствӑ хакӗпе илнӗ пулин те, вӑл частникрен илнӗ тесе суйа счетсем тунӑ. Счетсенче, паллах, пысӑк хаксем кӑтартнӑ. Ҫак майпа Степанӑв тата колхоз бухгалтерӗ Никитин иккӗш пӗрле пулса колхоз укҫине хӑйсем ҫумне чикнӗ, тесе пӗлтернӗччӗ корреспондент. Заметкӑна тӗрӗслеме Елӗк райҫӗрӗҫ пайне янӑ. Заметкӑра ҫырнисем тӗрӗс, халӗ Степанӑвпа Никитин пирки уголовнӑй ӗҫ пуҫарнӑ, тесе пӗлтерчӗҫ.

Улталаса сутакан прикащчик

Федӑрӑв продавец Ямашакри ялпо лавкинче пӗрмаях таварсен хакӗсене хӑйӗн ирӗкӗпе ӳстерсе сутнӑ. Сӑмахран, 6 т. 35 пус тӑракан карамеле—6 т. 50 пуса сутнӑ. 8 пус тӑракан тӳмесене 18 пуса сутнӑ. 2 т. 75 пус тӑракан катанпире (метр)—3 т. 78 пуса сутнӑ. Ытти таварсен хакӗсене ӳстерсе сутни те сахал мар пулнӑ, тесе ҫырнӑччӗ корреспондент заметкӑра. Трак районӗн прокурорӗ заметкӑ тӑрӑх тӗрӗслесен хаксене ӳстерсе сутнисем пӗтӗмпех тӗрӗссине палӑртнӑ.

Продавец Федӑрӑва суд ҫавӑншӑн тӗрмене хупмала тунӑ.

Краснодарти куҫ поликлиникинче 1920 ҫултанпа профессӑр-орденоносӗц С. В. Очаповский ӗҫлет. Вӑл ҫамрӑк профессӑрсемпе доцентсене 85 ҫын хатӗрленӗ. Унӑн научнӑй ӗҫӗсем вуншарӑн шутланаҫҫӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Профессӑр-орденоносӗц С.В. Очаповский.

И. Федӑрӑв фото-ӳкерчӗкӗ (Бюро-клише ТАСС).

те иљуминацилеме хушнӑ.

Патша Российӗнче православнӑй духовенствӑ урӑхла тӗн тытакансене хайаррӑн хӗсӗрленӗ, пӗтӗм кӑмӑлсӑр ҫынсене тыткалас ӗҫре патшасене пулӑшса пынӑ. Монастырсен тӗттӗм, йӗпе казамачӗсенче ҫӗршер, пиншер ҫын пӗтнӗ. Степан Разин, Иван Болотникӑв тата Йемельян Пугачов восстанийӗсене путарса лартнӑ чух хресченсене ҫӗмӗрес, вӗлерес ӗҫе чиркӳ чи активлӑн хутшӑннӑ. Христианла тӗн антисиметисӑмӑн чи хура та тискер ӗҫӗсемшӗн — йеврейсене хирӗҫ тунӑ погромсемшӗн ответлӑ пулса тӑрать, вӑл погромсем патша йӗрки вӑхӑтӗнчи Российӑра питӗ анлӑн сарӑлнӑ. Православнӑй чиркӳ тата унӑн пысӑк монастырӗсем — Кийево-Печорскайа, Троице-Сергийевскайа тата Почайевскайа лаврӑсем — черносотенла погромлӑ юхӑмӑн организаторӗсем пулнӑ.

Христианствӑ коловилӗ ҫӗршывсене пырса кӗнӗ ҫул юнпа хӗрелсе выртать. Маркс „Капиталра" Хуантӑн, христианствӑна хӑйен специаљнӑҫӗ туса хунӑ ҫынӑн ҫак сӑмахӗсене илсе кӑтартать: „Христианла расӑсем текеннисен варварлӑхӗ, намӑссӑр хайарлӑхӗсем, вӗсем тӗнчен хӑйсем парӑнтарма пултарнӑ пӗтӗм пайӗсем ҫинче пӗтӗм халӑхсем тӗлӗшпе тунӑ тискер ӗҫсем, кирек хӑш историлӗ тапхӑрта кирек хӑш расӑ тунӑ пӗтӗм хӑрушлӑхсенчен те пысӑкрах".

Христианла колонизаторсем Америкӑра христиансем индейӗцсен пуҫӗсем ҫинчен ҫӳсе илнӗ скаљпӑсемшӗн (скаљпа — ҫын пуҫӗ ҫинчен ҫӳҫпе пӗрле ҫӳсе илнӗ тир) наградӑсем пама йатарласах хаксем тунӑ пулнӑ. Сӑмахран, XIX-ш ӗмӗрте Калифорнире индейӗцӑн хӑлхаллӑ скаљпӑшӗн 20-шер доллар памала тунӑ. Епӗр пурӑнакан кунсенче те Америкӑри буржуази негрсем тӗлӗшпе тискер самосудсем (Линч сучӗсен тенине) тӑвать. Ҫак пӗтӗм тискер ӗҫсемпе преступленисене тума чиркӳ пил парса тӑрать.

Христианла чиркӳ вӑрӑ-хурахла, тискер кайӑкла вӑрҫӑсене яланах тӳрре кӑларса пынӑ, вӗсене тума пил панӑ. Истори пирӗн валљи XI—XIII-мӗш ӗмӗрсенчи крестовой походсем туни ҫинчен ҫырнисене сыхласа хӑварнӑ, унчухне крестоносӗцсем ҫарӗ-ҫарӗпе тухса пуйан хуласене тӗппипех ҫӗмӗрсе пӗтерсе ҫӳренӗ, пуйан та тулӑх облаҫсенчен пушӑ хирсем тӑва-тӑва хӑварнӑ. Крестовой походсем „турӑ мухтавӗшӗн" 2 мӗлйуна йахан ҫын пӗтернӗ.

1914 ҫулти империализмлӑ вӑрҫӑна та христианла попсем ырласа пилленӗ. Фронтра тата тылра попсем: вӑрҫӑ „турӑ" йачӗпе, „христос мирӗ" йачӗпе пырать, вӑрҫӑ хирӗнче вилни турӑшӑн кӑмӑллӑ, тесе вӗрентнӗ.

Кӑҫалхи ҫул капиталисӑм тӗнчи раштав праҫникне каллех ӗнтӗ тупӑсем кӗрлесе, пуљӑсем шӑхӑрса, пулеметсем шатӑртатса тӑнӑ вӑхӑтра туса иртерет. Фашисла вӑрӑ-хурахсем Австрие туртса илчӗҫ, Чехословакие таткаласа ҫурса вакларӗҫ, вӗсем Германийе кайала варварла тискерлӗх вӑхӑчӗсем патне тавӑрчӗҫ, ӑна талкӑшпех тӗрме туса хучӗҫ, ӑна пыткӑсемпе мракобесин, йеврейсене хирӗҫле погромсен, ӗҫҫыннисене хайаррӑн пусмӑрласа мӑшкӑланисен ҫӗршывӗ туса хучӗҫ. Фашисла варварсем Испанипе Китайа юнпа шӳтерчӗҫ. Иккӗмӗш империализмлӑ вӑрҫӑ хӗрсех пырать. „Вӑрҫӑ Гибралтартан Шанхайа ҫити сарӑлса выртакан пит пысӑк ҫӗр талкӑшӗ ҫинче пырать. Вӑрҫӑ хӑйӗн орбитине ҫур миллиард ытла халӑха турса кӗртме ӗлкӗрчӗ те ӗнтӗ."[1])

Раштав кунӗсенче пӗтӗм ҫӗршывсенчи попсем тата сектантла проповедниксем пур амвонсем ҫинчен те мир ҫинчен кӑшкӑраҫҫӗ тата ҫав вӑхӑтрах фашисла агрессӑрсене тискер те вӑрӑ-хурахла ӗҫсем тума пил параҫҫӗ.

Христианла чиркӳ ҫӗр ҫинчи „миршӗн, ҫынсем хушшинчи ырлӑхшӑн" ҫакӑн пек тӑрӑшать ӗнтӗ.

Тӗн сӗрӗмне хирӗҫ кӗрешер.

Тӗн капиталиссене халӑх ҫиллине тытса чарма, халӑха ҫавӑрлӑхласа тытса тӑма пулӑшать. Сталин юлташ ҫапла калать:

„Ӗмӗрсен тӑршшӗнче ӗҫҫыннисем ҫурӑм ҫинчен пусмӑрҫӑсене сирпӗтсе антарма тата хӑйсен положенин хуҫисем пулса тӑма вуншар та ҫӗршер хут хӑтланса пӑхнӑ. Анчах кашнинчех вӗсене ҫапса ҫӗмӗрсе хур кӑтартнӑ. Вӗсем, хӑйсен тарӑхӑвӗпе мӑшкӑлне, ҫилливе тата ӑнӑҫман ӗмӗтне чӗрере пытарса, куҫӗсене хӑйсем пӗлмен пӗлӗт ҫине—хӑйсем ҫӑлӑнӑҫ тупма ӗмӗтленнӗ пӗлӗт ҫине тӗллесе, кайала чакнӑ". Октӑбӗрти социализмлӑ аслӑ революци ҫӗр чӑмӑрӗн ултӑмӗш пайӗ ҫинчи ӗҫҫыннисене капитализм пусмӑрӗнчен ҫӑлчӗ, вӗсене социализм ҫӗршывӗнче телейлӗ, хавасла пурнӑҫ пачӗ, вӗсене тӑван совет ҫӗрӗ ҫинче чӑн-чӑн телей пачӗ.

Октӑбӗрти социализмлӑ революци малтанхи кунӗсенчен пуҫласах христианла тӗн, ытти пӗтӗм тӗнсем пекех, ҫӗнӗ йӗрке тӗлӗшпе питӗ те тӑшманла позици ҫине тӑчӗ. Ҫапса ҫӗмӗрнӗ експлоататӑрсемпе пӗрле чиркӳ социализма хирӗҫ кӗрешӗве тухрӗ. Халӑх тӑшманӗсем, фашисла разведкӑсен агенчӗсем—троцкиссем, бухаринӗцсем, буржуалӑ-националиссем,—ҫак пӗтӗм ирсӗрсем, пирӗн ҫӗршыври ӗҫҫыннисем кӗрешсе илнисене пӗтерме хӑтланса пӑхас тесе, реакцилӗ церковниксемпе пӗрлешсе кайрӗҫ.

Ҫак тӗллевсенче тӗн праҫникӗсемпе, уйрӑмӑн илсен, раштав праҫникӗпе те усӑ кураҫҫӗ. Хамӑр ҫӗршывра ҫапса ҫӗмӗрнӗ експлоататӑрла классен юлашкисем, социализм ӗҫне сийен кӳрес тесе, раштав кунӗсенче хӑйсен вайӗсене мобилизацилеҫҫӗ. Иккӗленмели ҫук, церковниксемпе ҫектантсем тӗн сӗрӗмӗ сарас тесе пур майсемпе те тӑрӑшӗҫ. Часах Пӗтӗм Союзри халӑх переписӗ пулмала, ҫак переписе май вӗсем (халиччен пулнӑ пекех) тӗрлӗрен суйа сӑмахсем сарма хӑтланӗҫ.

Попсен агитацине хирӗҫ, тӗн сӗрӗмне хирӗҫ пирӗн хамӑрӑн агитацине кӑларса тӑратас пулать, христос ҫурални ҫинчен калакан халлапӑн пӗтӗм суйалӑхне тӑрӑшыв ҫине кӑларас пулать, тӗн сийенлӗ, вӑл наукӑпа тата социализмпа килӗшӳлӗ пулма пултараймасть. Тӗне хирӗҫле агитаципе пропагандӑна вӑйлӑлатас ӗҫре, Вӑрҫӑлӑ Турӑсӑрсен Союзӗн организацийӗсене ҫирӗплетес ӗҫре раштав праҫникӗсемпе усӑ курас пулать.

[1]) „Краткий курс истории ВКП(б)" стр. 318, Госполитиздат, 1938.

Пӗтӗм Союзри халӑх переписӗ умӗн

Агитаторсен ӗҫӗпе

ТӐРМАШ ялсовечӗ переписе лайӑх иртерес тӗлӗшпе виҫӗ ялта та пухусем туса иртернӗ. Колхозсенче бригадирсен канашлӑвӗсене иртернӗ. Унта агитаторсем уйӑрнӑ. Агитаторсенчен Ласточкинӑ, Иванов юлташсем пуриччен лайӑхрах ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Вӗсем перепиҫ мӗншӗн кирли ҫинчен ял ҫыннисене тӑтӑшах ӑнлантарса параҫҫӗ; стена хаҫачӗсем кӑлараҫҫӗ, диаграммӑсем тӑваҫҫӗ. Канцељаринче, вуламали ҫуртра тӗрлӗ диаграммӑсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Вӑл диаграммӑсенче ялсенче ӗлӗк, патша вӑхӑтӗнче, хут пӗлекенсем миҫе ҫын пулнине тата халӗхи вӑхӑтра миҫе ҫын шутланнине, пирӗн интеллигенци, куљтурӑ ӳссе пынине кӑтартнӑ.

Иалти ҫынсем переписе хатӗр, вӗсем перепиҫ хӑҫан пулассине лайӑх пӗлеҫҫӗ. Ку ӗнтӗ агитаторсен ӗҫӗпе пулнӑ.

Парторг ШЧЕРБАКОВ.
Йелчӗк районӗ.

Партактив переписе хатӗрленес тӗлӗшпе ӗҫлет

Юлашки вӑхӑтра Пӗтӗм Союзри халӑх переписне хатӗрленес тӗлӗшпе массӑлӑ-политикӑлӑ тата ӑнлантарулӑ ӗҫ начарланнине кура, ПСК(б)П Йелчӗк райкомӗ декабӗрӗн 19-мӗшӗнче районри партактивӑн канашлуне туса иртерчӗ.

Переписе мӗнле хатӗрленсе иртересси ҫинчен партактива докладсем туса пачӗҫ.

Канашлура 32 ҫын пулчӗ. Тухса каланӑ юлташсем колхозсенче политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе вӑйлатмалине кӑтартрӗҫ.

Перепиҫ ҫинчен колхозниксен пухӑвӗсенче лайӑхрах ӑнлантарса пама, ялсене докладчиксем ярса переписе иртерме болшевикла хатӗрленме пулчӗ партактивӑн канашлувӗ.

Н. Волкӑв.

Агитколлектив ӗҫре

Ҫӗнӗ Шӑхран (Патӑрйел р.) ялсовечӗ 1939 ҫулти переписе тимлӗн хатӗрленет. Перепиҫ ҫинчен ӗҫхалӑх массине ӑнлантарас тӗлӗшпе агитколлектив ӗҫлет.

Ялсовет канцељаринче перепиҫ ҫинчен ӑнлантарса пама уйрӑм пӳлӗм уйӑрса хунӑ. Кунта счетчик Тихӑнӑв Сергей ял ҫыннисене перепиҫ ыйтӑвӗсем ҫинчен ӑнлантарса парать. Вуламали ҫуртра перепиҫ кӗтесӗ организациленӗ. Унта перепиҫ ҫинчен ҫырнӑ статйасене пухса хунӑ. Ҫавнашкалах перепиҫ ыйтӑвӗҫемпе пӗрре аслӑ пуху тунӑ. Пушкин йачӗпе тӑракан колхозра та пуху туса иртернӗ. Агитколлектив перепиҫ ҫинчен кил тӑрӑх ӑнлантарса ҫӳрет.

Макарӑв.

Перепиҫ кадрӗсем

Пӗтӗм Союзри халӑх переписне иртерме кадрсем хатӗрлес тӗлӗшпе Йетӗрне районӗнче виҫ-тӑват кунлӑх курссем организациленӗ. Йетӗрнери курсран 21 инструктӑр-контрољорсем тата 30 счетчик, Тури Ачакри курсран 19 счетчик вӗрентсе кӑларнӑ.

Переписе иртерме кадрсене декабӗрӗн 25-мӗш тӗлне хатӗрлесе ҫитернӗ.

Иакӑвлӗв.

Францири социалисла партин чрезвычайнӑй сиесӗ

Декабӗрӗн 24-мӗшӗнче Монружра (Париж предместийи) Францири социалисла партин чрезвычайнӑй сиесӗ уҫӑлнӑ. Сиесра тӳррех тӗнчери лару-тӑру ыйтӑвӗсем тӑрӑх пренисем пуҫланмала пулнӑ. Анчах та социалисла партин Луар тата Шор департаменчӗсенчи федерацисем партин тулашри политикӗ тӑрӑх резоӆуци хатӗрлеме йыталаса килӗштерӳ комиҫҫи тума „малтанлӑх сӗнӳ" текен сӗнӳ панӑ. Ҫак комиҫҫин тулашри политика ыйтӑвӗ тӑрӑх Блюмпа Поӆ Фор тӑратнӑ икӗ резоӆуцине килӗштерсе пӗр резоӆуци хатӗрлемеле.

Францири социалисла парти ӑшӗнче партин тулашри политика ыйтӑвӗ тӑрӑх Блюм майлӑ тӑракансемпе Поӆ Фор майлӑ тӑракансем хушшинче вӑйлӑ кӗрешӳ пырать.

Леон Блюм тӑратнӑ резоӆуци Даладйе правитӗлствин Мӳнхенри капитуӆаантла политикине сивлет, тӗнче вӑл-ҫӗнмсле марри — коллективлӑ хӑрушсӑрлӑхӑн никӗсӗ пулать тесе йышӑнса, фашисла агрессӑрсене хирӗҫ тӑрас политикӑ тытма чӗнет.

Поӆ Фор резоӆуцийӗ, тӗрӗссипе илсен, Мӳнхенри килӗшӳ политикине ырлать, кирек мӗнле пулсан та мир тума ыйтать.

„Малтанхи сӗнӳ" тӑрӑх пуҫланнӑ прениre Нор департаменчи федерацин йачӗпе Леба тухса каланӑ. Вӑл Нор департаменчи федерацийӗн ытларахӗшӗ компромисла резоӆуцие майлӑ тӑрать, тенӗ. Блюм тата тулашри политикӑ тӑрӑх компромисла резоӆуци хатӗрлеме комиҫҫи тӑвассине майлӑ пулса каланӑ. Ҫак сӗнӗве Поӆ Фор та йышӑннӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн сиес, килӗштерӳ комиҫҫи тума йышӑннӑ.

Парижран пӗлтернӗ тӑрӑх, килӗштерӳ комиҫҫийӗ пысӑк йӑвӑрлӑхсем умне тухса тӑнӑ.

Блюм: тулашри политикӑ ыйтӑвӗ тӑрӑх хӑй тӑратнӑ резоӆуцин виҫӗ тӗп пункчӗ майлӑ хыттӑн тӑрасси ҫинчен пӗлтернӗ. Вӑл пунктсем ҫапла: Франции национӑӆнӑй оборонӑ средствине лайӑхлатса пымала, Франци ытти ҫӗршывсемпе тунӑ догӑварсене ҫаплипех хӑвармала, тӗнче конференцине пухмала.

(ТАСС).

Ватӑлӑхри телей

Ф. Блинов хӑйӗн ӗмӗрӗнче нумай хура-шур курнӑ. Ҫитмен пурнӑҫ, чухӑнлӑх унӑн сывлӑхне те чакарнӑ. Тепӗр чухне, аптраса ҫитсен вилӗмне те кӗтнӗ вӑл. Анчах ҫав хӗн-хура Октябӗрти аслӑ революци ӗмӗрлӗхех Блинов йулташӑн ҫулӗ ҫинчен сирсе пӑрахрӗ. Умма ҫӗнӗ, телейлӗ пурнӑҫ тухса тӑчӗ. Халӗ вӑл 65 ҫула ҫитнӗ. „Осоавиахим" колхоз (Йелчӗк р.) членӗ пулса тӑрать. Унӑн ывӑлӗ инженер, хӗрачи врач пулма вӗренеҫҫӗ. Блинов хӑй колхозри общӗствӑлӑ пурлӑхсене сыхлакан — хуралҫӑра ӗҫлет.

Иртнӗ ҫул Блинов йулташ колхозра ӗҫлесе пӗччен 270 пӑт тырӑ илнӗ пулсан, кӑҫал вӑл 100 пӑт тырӑ. 30 пӑт выҫӑх кӑшманӗ, 15 пӑт купӑста, 5 пӑт кишӗр, 15 пӑт ҫӗрулми, тата кантӑр сӳсӗ илет.

А. Палашкин.

Республикӑри 7-мӗш шашкӑ турнирӗ

Декабӗрӗн 25-мӗшӗнче Шупашкарти ...чет ҫуртӗнче республикӑри шашкӑ турнирӗ пуҫланчӗ. Кӑҫалхи турнира пурӗ 11 шашист кӗрет. Вӑл хисепрен Йетӗрне районӗнчен иккӗн, Улатӑртан пӗрре, ыттисем пурте Шупашкарти спорт общӗствисенчен пухӑннӑ.

Пӗррӗмӗш турта А. Никитин Г. Ивановран, Ижейӗв Ив. (Йетӗрне) М. Ижейӗвран («Правда»), Жидков (Улатӑр) Федотӑвран (Йетӗрне) выӆҫаса илчӗҫ. Стаӆуковпа Мишуткин партийӗ никама та ҫӗнтерейменнипе пӗтрӗ. Студенецкипе Хохлов выӆамарӗҫ.

Иккӗмӗш турта М. Ижейӗв—Мишуткинран выӆҫаса илчӗ. Федотӑв—Иванова, И. Ижейӗв—Никитина выӆҫаса йачӗҫ. Воскресенскипе Хохлов выӆамарӗҫ.

И. Ижейӗв.

Филармони артисӗсен гастролӗ йалта

Чӑвашсен государствӑ филармони артисӗсен ушкӑнӗ декабӗрӗн 17-мӗшӗнче Шӑхасан районӗнчи Аваспӳрт Кипечри колхоз клубӗнче выступлени турӗ.

Декабӗрӗн 18-мӗшӗнче ҫав программӑпах ачасене кӑтартрӗ.

Циркпа естрадӑна курма халӑх пит те нумай пухӑнчӗ.

Й. Йефимӑв.

Ответлӑ редактӑр Н. М. ҪЕМЕНАВ.

Государствӑн пурӑнмали ҫуртйӗр фондне, ҫавӑн пекех тата государствӑн уйрӑм граждӑнсем тата частнӑй организацисем усӑ куракан пурлӑхне обйазатӗӆнӑ страхламали

П Р А В И Л Ӑ С Е М

I. Мӗнле пурлӑха страхламала

1. ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1938 ҫулти февралӗн 3-мӗшӗнче «Предприйатисен, учреждениесен тата организацисен пурлӑхне государствӑ страхласси ҫинчен» йышӑннӑ 111-мӗш №-лӗ постановленин 1-мӗш статйи тӑрӑх обйазатӗлнӑ йӗркепе ҫаксене страхламала:

а) государствӑ предприйатисен, учреждениесен тата организацисен тата ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсен аллинче тӑракан пурӑнмали ҫуртйӗрсене (вӑл шутра бараксене) тата вӗсен ҫумӗнчи хуҫалӑхлӑ хуралтсене пурне те;

б) государствӑ предприйатисемпе учреждениесен ҫуртйӗрӗсемпе ытти пурлӑхне, арендӑна йе усӑ курма урӑх майпа уйрӑм ҫынсене йе частнӑй организацисене панӑскерсене.

2. Обйазатӗӆнӑ йӗркепе ҫаксене страхламала мар:

а) туса пӗтермен пурӑнмали ҫуртйӗрсемпе вӗсен ҫумӗнчи хуҫалӑхлӑ хуралтсене;

б) промышлӗннӑҫ строитӗлствисене йе урӑх строитӗлствӑсене туса пӗтерлӗ хыҫҫӑн пӑсмали вӑхӑтлӑх бараксене;

в) ҫуртуправлениесен инвентарне, транспӑрт средствисене, оборудованине тата ремонтно-строитӗлнӑй материалсене;

г) ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсемпе государствӑ учреждениесен тата предприйатисен аллинче тӑракан, пӗтӗмпех йе пӗтӗмпе пекех суту-илӳ, склад, кантур тата ытти помешчени вадӑӆи йышӑннӑ ҫуртйӗрсене.

II. Страховой убыткӑсене мӗнле чухне тӳлессӗ

3. Ҫак правилӑсем тӑрӑх страхланӑ пурлӑхшӑн ҫав пурлӑх вут-кӑвара, шыв илнине, ҫӗр чӗтретнине, ҫӗр ишӗлнине, ҫӗр шуса аннине, ҫил-тӑвӑла, урагана, пӑр ҫапнине, ҫиҫӗм тивнине, пӑс хуранӗ ҫурӑлса кайнине пула пӗтсен йе пӑсӑлсан убыткӑсене тӳлессӗ.

Пушарӑ хирӗҫ кӗрешекен охранӑ органӗсем йе вырӑнти ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсем хушнипе—пушар сарӑлса кайассине чарса лартма кирлӗшӗн ҫуртйӗре пӑсни кирлӗ пулнӑ чухне те пурлӑха страхланисене Госстрах убыткӑсене тӳлет.

Кунсӑр пуҫне, ҫак параграфра кӑтартнӑ пек пулнӑ тӗлсенче страхланӑ пурлӑха ҫӑлса хӑварма чӑннипех кирлӗ пулнӑ расхутсене, ҫавӑн пекех тата убыткӑсен пысӑкӑшне пӗчӗклетме тата пушар хыҫҫӑн йе ытти инкек-синкек хыҫҫӑн пурлӑха йӗркене кӳртме кирлӗ расхутсене тӳлессӗ.

4. Ҫӗнӗрен тӑвакан ҫуртсене страхлани тӑрӑх Госстрахӑн ответлӑхӗ ҫав ҫуртсене екеплоатацине панӑ (строитӗлствӑна хуҫи йышӑннӑ) самантран пуҫланать.

5. Государствӑ предприйатисемпе учреждениесен арендӑна йе усӑ курма урӑх майпа уйрӑм ҫынсене йе частнӑй организацисене панӑ пурлӑхне страхлани тӑрӑх Госстрах ответлӑхӗ арендӑ догӑварне тунӑ йе пурлӑха усӑ курма урӑх майпа пани ҫинчен догӑвар тунӑ самантран пуҫланать.

Ҫак пурлӑх тӗлӗшпе Госстрах ответлӑхӗ догӑвар срукӗ тухнӑ йе вӑл вӑйра пуласси чарӑннӑ самантран пӗтет.

6. Убыткӑсене, вӗсем мӗнле сӑлтавран пулнине пӑхмасӑрах, кашни убыткӑ пӗр тӗрлӗ страховани тӑрӑх 100 тенкӗ тарана ҫитмеҫҫӗ пулсан, тӳлемеҫҫӗ.

7. Обйазатӗӆнӑ йӗркепе страхламали пурлӑха, инкек-синкеке пула сийен курӑнӑскерне йе пӗтнӗскерне, ҫурт управленийӗ Госстрах органӗсенче регистрациленмен пулсан, Госстрах убыткӑсене тӳлемест.

Страховкӑ тӑваканӗ страхланӑ пурлӑх пӗтни йе пӑсӑлни ҫинчен, май пур ҫӗртенех, кӑтартса панӑ срукра пӗлтермен пулсан, Госстрахӑн убыткӑсене тӳлессине прахӑҫ тума права пур.

8. Страхланӑ пурлӑх пӗтнишӗн йе пӑсӑлнишӗн айӑплӑ ҫынсенчен Госстрах тӳленӗ страховой возмещенине шыраса илме Госстрах халӑх суйчӗ урлӑ иск тӑратма пултарать.

III. Страховой суммӑсем

9. Государствӑн пурӑнмали ҫуртйӗр фондне, ҫавӑн пекех тата государствӑн уйрӑм граждӑнсем йе частнӑй организацисем усӑ куракан пурлӑхне балансри (инвентарийӗ) хакӗ чухлӗ — кивелнишӗн чакармасӑр—страхлаҫҫӗ.

10. Тӗн йӑлин ҫуртӗсене (чиркӳсене, мечетсене, синагогӑсене т. ыт. те), ӗненекенсен ушкӑнӗсене усӑ курма панисене, страховой оценкӑ чухлӗ страхлаҫҫӗ.

IV. Страхламали пурлӑха учот тумали йӗрке

11. Ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсене йе государствӑ предприйатисене, учреждениесене пӑхӑнса тӑракан ҫурт управленийӗсен тата дачнӑй трестсен, страховани тӑваканӗсен тата ыттисен те ССРС Госстрах Тӗп Управлени тунӑ формӑ тӑрӑх Госстрахӑн вырӑнти инспекцине страховани ҫинчен зайавлени (страховкӑ зайавленийӗ) памала.

Кӑтартнӑ зайавленисене кашни ҫулленех кашни ҫулхи декабӗрӗн 1-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр, тата ҫӗнӗрен туса лартнӑ йе туйаннӑ пурӑнмали ҫуртсемпе вӗсен ҫумӗнчи хуҫалӑх хуралтисем тӗлӗшпе вӗсене експлоатацие панӑ вӑхӑтран пӗр уйӑхран кайа йулмасӑр памала.

Арендӑна йе усӑ курма урӑх майпа уйрӑм ҫынсене йе частнӑй организацисене панӑ пурлӑха страхлас тӗлӗшпе (п. «б» § I) страховкӑ зайавленисене пурлӑх хуҫисем кашни ҫулленех декабӗрӗн 1-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр параҫҫӗ.

Асӑрхаттарни. 1938 ҫулта страхлас тӗлӗшпе страховкӑ зайавленисене 1938 ҫулти нойабӗрӗн 15-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр параҫҫӗ.

12. Страховкӑ зайавленисене страховкӑ тӑваканӗ хӑй пурӑнакан территоринчи районри (хулари) Госстрах инспекцине параҫҫӗ.

13. Государствӑ учреждениесен тата предприйатисен арендӑ догӑварне йе государствӑ пурлӑхне усӑ курма урӑх майпа ҫынсене йе частнӑй организацисене пани ҫинчен догӑвар тунӑ вӑхӑтран (п. «б» § I) 10 кунран кайа йулмасӑр ҫавӑн ҫинчен ҫырса страховкӑ тумали пурлӑх хӑш территоринчи районри йе хулари страховкӑ инспекцине пӗлтермеле.

Ҫырса пӗлтернинче пурлӑх мӗнлескеррине тата ӑҫтине, ҫавӑн пекех тата унӑн хакне, пурлӑха усӑ курма панӑ ҫынӑн йатне, догӑварӑн пуҫламӗш тата йулашки срукне кӑтартмала.

V. Страховкӑ тӳлевӗсем

14. Страховкӑ тӳлевӗсене ҫак тарифлӑ ставкӑсем тӑрӑх шутласа кӑлараҫҫӗ (приложенисене пӑхӑр).

15. Страховкӑ тӳлевӗсене страховкӑ зайавленине унта панӑ район (хула) страховкӑ инспекцийӗсем шутласа кӑлараҫҫӗ. Районри страховкӑ инспекцийӗ страховкӑ тӑвакансене кашнинех декабӗрӗн 15-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр малашнехи ҫулталӑкшӑн страховани туни тӑрӑх тӳлев пӗлтерӗвӗсене йарса парать.

Тӳлев пӗлтерӗвӗсене страховкӑ инспекторӗ страховкӑ тӑваканне ал пуҫтарса алранах парать йе почтӑ тӑрӑх заказлӑ ҫыруҫа йарса параҫҫӗ.

Асӑрхаттарни. 1938 ҫулшӑн страховани туни тӑрӑх тӳлев пӗлтерӗвӗсене страховкӑ тӑвакансене 1938 ҫулти нойабӗрӗн 25-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр йарса параҫҫӗ.

16. Страховкӑ тӳлевӗсене ҫаксем хываҫҫӗ:

а) государствӑн пурӑнмали ҫуртйӗр фондне страхлани тӑрӑх — пурӑнмали ҫуртйӗр фончӗ вӗсен аллинче тӑракан ҫурт управлениесем йе государствӑ учреждениесем тата предприйатисем;

б) ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсен аллинче тӑракан, вӑрӑм срукӑх арендӑ догӑварӗсем тӑрӑх уйрӑм граждӑнсене усӑ курма панӑ (5 ҫултан пуҫласа 10 ҫул таран срукӑха) ҫуртсене страхлани тӑрӑх,—ҫав граждӑнсем;

в) пурӑнмали ҫуртйӗр управлениесен дачнӑй трестсен аллинче тӑракан дачӑсене страхлани тӑрӑх,—ҫав трестсем;

г) государствӑ предприйатисен тата учреждениесен арендӑна йе усӑ курма урӑх майпа уйрӑм ҫынсене панӑ пурлӑха страхлани тӑрӑх,—ҫав ҫынсем, тата арендӑна йе усӑ курма урӑх майпа частнӑй организацисене панӑ пурлӑха страхлани тӑрӑх—ҫав организацисем.

17. Страховкӑ тӳлевӗсене ҫурт управленийӗсем тата дачнӑй трестсем пӗр пекшер пайӑн икӗ срукра—кашни ҫулленех февралӗн 1-мӗшӗнчен тата апрелӗн 15-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр тӳлессӗ.

Ҫӗнӗрен туса лартнӑ йе туйаннӑ пурӑнмали ҫуртсене тата вӗсен ҫумӗнчи хуҫалӑхлӑ хуралтсене страховкӑ туни тӑрӑх, страховкӑ тӳлевӗсене страховкӑ тӑваканӗ тӳлев пӗлтерӳне илнӗ хыҫҫӑн пӗр уйӑхлӑх срукра тӳлессӗ.

Асӑрхаттарни. 1938 ҫулшӑн страховкӑ туни тӑрӑх тӳлевсене пӗтӗмпех 1938 ҫулти декабӗрӗн 10-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр тӳлессӗ.

18. Государствӑ учреждениесен тата предприйатисен арендӑна йе усӑ курма урӑх майпа панӑ пурлӑхне страхлани тӑрӑх тӳлевсене ҫакӑн пек тӳлессӗ:

а) уйрӑм ҫынсем—пӗр пекшер пайӑн икӗ срукра: кашни ҫулленех йанварӗн 15-мӗшӗнчен тата мартӑн 1-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр;

б) частнӑй организацисем—пӗр вӑхӑтра—йанварӗн 15-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр.

19. Черетлӗ тӳлевсене кӑтартнӑ срукра хывмасан страховкӑ тӳлевӗпе пӗрле пени тӳлессӗ, пенине ҫак висене шутласа илессӗ: срукра хывман тӳлеве хывма срук иртернӗ кашни кунӑшӑн ҫурт управленисенчен — 0,05 проц.; уйрӑм ҫынсенчен тата частнӑй организацисенчен — 0,1 проц.

20. Страховкӑ тӳлевӗсене кӑтартнӑ срукра тӳлемесен страховкӑ инспекторӗсен 10 кун хушши срукра недоимщиксене тӳлевсене хывмалине астутарса ҫырусем йамала. Ҫав астутарнисен копийӗсене тивӗҫлӗ ҫурт управленине, предприйатине йе учреждениене—вӗсем недоимкӑна тӳлесе татма кирлӗ мерӑсене йышӑнччӑр тесе—йарса параҫҫӗ.

Страховкӑ тӳлевӗсене кӑтартса панӑ недоимкӑ срукӗсем иртсен 15 кун хушшинче хывмасан, государствӑ учреждениесенчен (вӑл шутра ҫурт управленисенчен) тата предприйатисенчен, ҫавӑн пекех тата частнӑй организацисенчен илмелине тавлашусӑрах шыраса илессӗ, уйрӑм ҫынсенчен илмелисене ССР Сойузӗн Тӗпӗҫтӑвкомӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1937 ҫулти апрелӗн 11-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленире кӑтартнӑ йӗркепе шыраса илессӗ (Постановление ЦИК и СНК Союза ССР от 11 апреля 1937 г. «Об отмене административного порядка и установлении судебного порядка из'ятия имущества в покрытие недоимок по государственным и местным налогам, обязательному окладному страхованию, обязательным натуральным поставкам и штрафам с колхозов, кустарно-промысловых артелей и отдельных граждан» (С. З. СССР 1937 г. № 30, ст. 120).

21. Обйазатӗӆнӑ страховкӑ тумала, анчах регистрациленмен ҫуртйӗрсене Госстрах органӗсем палӑртсан, страховкӑ тӳлевӗсене вӗсене регистрацилемесӗр тӑнӑ мӗн пур вӑхӑтшӑн, анчах икӗ ҫулран ытла мар (кӑҫалхи ҫула шутламасӑр) шыраса илессӗ.

22. Хывнӑ страховкӑ тӳлевӗсене ҫакӑн пек чухне кайала таварса памала:

а) вӗсене тӗрӗс мар шутласа кӑларнӑ пулсан;

б) арендӑ догӑварне прахӑҫа кӑларнӑ йе государствӑ пурлӑхӗпе усӑ курма чарӑннӑ чухне уйрӑм ҫынсем ыйтнипе.

23. Убыткӑсемшӗн страховкӑ возмещенине тӳленӗ чухне ҫак ҫулхи страховкӑ тӑрӑх тӳлемели страховкӑ тӳлевӗсене, ҫавӑн пекех тата иртнӗ ҫулсенчи недоимкӑна тытса йулаҫҫӗ.

VI. Страховкӑ тӑваканӗсен обйазаннӑҫӗсем

24. Страховкӑ тӑваканӗ ҫаксене пурнӑҫа кӗртсе пыма тивӗҫлӗ:

а) страхланӑ пурлӑха йӗркелӗ пӑхса усрамала, пушара хирӗҫ обйазатӗлнӑй правилӑсене пӑхӑнмала, страхланӑ пурлӑх пӗтессине хе пӑсӑлассине сирсе йама хӑй мӗн тума пултарнине пурне те тумала;

б) унӑн тӳлемели страховкӑ тӳлевӗсене кӑтартса панӑ срукра тӳлесе пымала;

в) страховкӑ зайавленийӗсене кӑтартса панӑ срукра районри (хулари) страховкӑ инспекцине памала тата унта тулли те тӗрӗс сведӗнисем кӗртмеле.

25. Инкек-синкек пулсан (пушар, шыв илни т. ыт. те) страховкӑ тӑваканнин пурлӑха ҫӑлса хӑварма тивӗҫлӗ ҫеҫ мар, тата унӑн пӑсӑлнӑ пурлӑха малала пӑсӑласран йе пӗтӗлесрен сыхлама мӗн кирлине пурне те тумала.

Страховкӑ тӑваканӗн пушар хыҫҫӑн йулнӑ йулашкисене Госстрах представителӗ пырса ҫитиччен усрамала.

26. Пурлӑха страхлаканӗн пулнӑ убыткӑн пысӑкӗшне палӑртма мӗн кирлисене хӑйӗнче пуррине пӗтӗмпех тӑратмала.

27. Страховкӑ тӑваканӗн пушар, шыв илни йе ытти инкек-синкек пулни ҫинчен Госстрахӑн районри (хулари) инспекцине ҫийӗнчех (икӗ талӑкран кайа йулмасӑр) пӗлтермеле.

Инкек-синкек пулни ҫинчен панӑ зайавленире ҫаксене кӑтартмала: мӗнле инкек-синкек тата хӑҫан пулнӑ, мӗнле пурлӑха сийен пулнӑ тата убыткӑн примерлӑ сумми.

VII. Убыткӑсем ҫинчен актсем ҫырасси

28. Страхланӑ пурлӑх пӗтни йе пӑсӑлни ҫинчен актсене Госстрах органӗн представителӗ ҫырать, акт ҫырнӑ ҫӗрте обйазатӗӆнӑ ҫаксем пулмала:

а) государствӑн пурӑнмали ҫуртйӗр фондӗнче убыткӑ пулнӑ чухне — ҫурт управӆайушчийӗ тата ҫурт управлени представителӗ йе ҫунса кайнӑ йе сийен курнӑ ҫуртсем вӗсен аллинче тӑракан государствӑ предприйатисен тата учреждениесен представителӗ;

б) государствӑ учреждениесен тата предприйатисен арендӑна йе усӑ курма урӑх майпа уйрӑм ҫынсене тата частнӑй организацисене панӑ пурлӑхра убыткӑ пулнӑ чухне,—ҫав предприйатисен тата учреждениесен представителӗ.

29. Госстрах представителӗн акт ҫырма тата убыткӑ мӗн чухлӗ пулнине палӑртма страховкӑ тӑваканӗ инкек-синкек ҫинчен панӑ зайавленине илнӗ хыҫҫӑн икӗ кунран кайа йулмасӑр тытӑнмала.

30. Страховкӑ инспекторӗ, кирлӗ чухне Госстрах управленин представителӗ акт ҫырма кӑтартса панӑ срукра пымасан, вара страховкӑ тӑваканӗн пушар хыҫҫӑнхи йулашкисене кӑтӗртме, ҫуртйӗре кирлӗ ремонта тума тытӑнма тата пӑсӑлнӑ пурлӑха вырӑнтан куҫарма права пур.

31. Страхланӑ ҫуртйӗр пӗтӗмпех пӗтсессӗн страховкӑ возмещенине ҫав ҫурта страхланӑ суммӑ чухлӗ, урӑхла каласан, страховкӑ тӳлевӗсене ҫавӑн тӑрӑх шутласа кӑларнӑ суммӑ чухлӗ, пӗр пайӗ пӑсӑлнӑ чухне—ҫав суммӑн пайне, ҫуртйӗр пӑсӑлни мӗн чухлине кура (процентпа) параҫҫӗ.

VIII. Ҫирӗплетесси тата убыткӑсене тӳлесси

32. 25 пин тенкӗ таран убыткӑ курни ҫинчен ҫырнӑ акта старший страховой инспектӑр пӑхса тухать тата хулари (районри) финанс пайӗн пуҫлӑхӗ ҫирӗплетет.

Акта вӑл страховой инспекцине кӗнӗ кунран икӗ кунран кайа йулмасӑр ҫирӗплетмеле.

33. 25 пин тенкӗрен ытларах суммӑлӑ убыткӑ ҫинчен ҫырнӑ акта Госстрахӑн ҫӳлерехри органӗ ҫирӗплетет.

34. Убыткӑна акта ҫирӗплетнӗ кунран пилӗк кунран кайа йулмасӑр тӳлемеле.

35. Государствӑн ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсен аллинче тӑракан пурӑнмали ҫуртйӗр фондне страховкӑ туни тӑрӑх убыткӑсене укҫана ҫурт управленисен счечӗ ҫине (капитаӆнӑй ремонт счечӗ ҫине) куҫарса тӳлессӗ, ҫавӑн ҫинчен вырӑнти советӑн пурӑнмали ҫуртйӗр управленине пӗлтереҫҫӗ, государствӑ предприйатисен тата учреждениесен аллинче тӑракан ҫуртсемшӗн — ҫав предприйатисен тата учреждениесен счечӗ ҫине куҫарса тӳлессӗ.

Государствӑ учреждениесен тата предприйатисен арендӑна йе частнӑй организацисене панӑ пурлӑх тӑрӑх убыткӑсене укҫана государствӑн ҫав предприйатисен тата организацисен счечӗ ҫине куҫарса тӳлессӗ.

36. Госстрах органӗсенчен государствӑн страхланӑ пурӑнмали ҫуртйӗр фончӗн убыткисене таварса илнӗ укҫатенкӗ ҫав фонда ҫӗнӗрен тума ҫеҫ усӑ курмала, вӑл укҫа-тенке капитаӆнӑй строитӗлствӑ планӗсӗр пуҫне расхутлама йурать.

IX. Жалӑбӑсем

37. Страховой инспектӑрсем ӗҫсене тӗрӗс мар туни ҫинчен жалӑбӑсене районри йе хулари финанс пай пуҫлӑхне памала. Страховой возмещени пысӑккӑшне тӗрӗс мар шутласа кӑларни ҫинчен жалӑбӑсене отказ туни ҫинчен пӗлтернине илнӗ йе страховой суммине илнӗ кунран пӗр уйӑхран кайа йулмасӑр памала.

38. Районри йе хулари финанс пай пуҫлӑхӗн хӑй патне кӗнӗ кашни жалӑбӑна илнӗ кунран 10 кунран кайа хӑвармасӑр пӑхса тухса хӑйӗн решенине йышӑнмала тата хӑйӗн решенийӗ ҫинчен пӗр талӑклӑх срукра страховкӑ тӑваканне ҫырса пӗлтермеле.

39. Районри йе хулари финанс пай пуҫлӑхӗсен тӗрӗс мар решенийӗсем ҫинчен жалӑбӑсене—облаҫсем (крайсем) ҫук ҫӗрте Госстрахӑн сойузлӑ республикӑри управленине, йе Госстрахӑн автономлӑ республикӑсенчи, крайсенчи тата облаҫсенчи управленисене памала. Госстрахӑн облаҫри (крайри) управленийӗсен тата Госстрахӑн АССР управленийӗсен решенийӗсем ҫинчен жалӑбӑсене—облаҫсем (крайсем) пур ҫӗрте—Госстрахӑн сойузлӑ республикӑсенчи управленисене памала, Госстрахӑн сойузлӑ республикӑсенчи управленисен решенийӗсем ҫине—Госстрахӑн ССР Сойузӗн Тӗп Управленине.

Жалӑбӑсене районри (хулари) финанс пай пуҫлӑхӗ йе Госстрах управленийӗ жалӑбӑ тӑрӑх йышӑннӑ решенине страховкӑ тӑваканӗ илнӗ кунран уйӑхлӑх срукра памала.

40. Госстрахӑн республикӑсенчи, крайсенчи тата облаҫсенчи управленийӗсен хӑйсем патне кӗнӗ кашни жалӑбӑна ӑна илнӗ кунран 10 куӆлӑх срукран кайа йулмасӑр пӑхса тухмала, хӑйсен решенийӗ ҫинчен страховкӑ тӑваканне тата тивӗҫлӗ районри (хулари) финанс пайне ҫырса пӗлтермеле.

ССР Сойузӗн Финанс Халӑх Комиссарӗн зам. **М. Бодров.**

Госстрахӑн ССР Сойузӗнчи Тӗп Управленин начаӆникӗ **А. Власӑв.**

1938 ҫ. октябӗрӗн 7-мӗшӗ, № 549/196.

ПРИЛОЖЕНИ

ССР Сойузӗн Финанс Халӑх Комиссарӗ 1938 ҫ. октябӗрӗн 7-мӗшӗнче кӑларнӑ 549—196 №-лӗ правилӑсем ҫумне.

Государствӑн пурӑнмали ҫуртйӗр фондне, ҫавӑн пекех тата государствӑн уйрӑм граждӑнсем тата частнӑй организацисем усӑ куракан пурлӑхне обйазатӗӆнӑ страхламали

Т А Р И Ф С Е М

I. Государствӑн пурӑнмали ҫуртйӗр фондне страхламалисем

а) Хуласенче тата рабочи поҫолӑксенче (пур ҫӗрте те):

чул ҫуртсене страхлама—страховой суммӑн 100 тенкинчен 8 пус;

ытти ҫуртйӗрсене страхлама—страховой суммӑн 100 тенкинчен 15 пус.

б) Йалти тата дачӑлӑ вырӑнсенче:

чул ҫуртсене страхлама—страховой суммӑн 100 тенкинчен 15 пус;

ытти ҫуртйӗрсене страхлама—страховой суммӑн 100 тенкинчен 30 пус.

Асӑрхаттарни. Государствӑн чукунҫулсене тата шывҫул транспӑртне уйӑрса панӑ ҫӗрти пурӑнмали ҫуртйӗр фондне страхлани тӑрӑх тарифлӑ ставкӑсем хуласене тата рабочи поҫолкӑсене вадӑӆи йышӑннисем пулаҫҫӗ.

II. Государствӑ учреждениесен тата предприйатисен арендӑна йе усӑ курма урӑх майпа панӑ ҫуртйӗрӗсене тата ытти пурлӑхне страхламалисем

а) Арендӑна йе усӑ курма урӑх майпа уйрӑм ҫынсене панӑ пурӑнмали ҫуртйӗрсене страховкӑ тума, ҫавӑн пекех тата государствӑн посоӆствӑсене йе урӑхҫӗршыв государствисен представителӗсене арендӑна йе усӑ курма урӑх майпа панӑ ҫуртйӗрсене страховкӑ тунӑ чухне страховкӑ тӳлевӗсене ҫак тарифӑн 1-мӗш пайӗнче кӑтартнӑ ставкӑсем тӑрӑх шутласа кӑлараҫҫӗ.

Асӑрхаттарни. Арендатӑрсем йе тара илнисем йединоличник хресченсем, кооперациленмен кустарсем тата ремесленниксем пулсан, вара страховкӑ тӳлевӗсене йединоличник хресченсен ҫуртйӗрӗсене обйазатӗлнӑ окладлӑ страховани тумали тарифлӑ ставкӑсем тӑрӑх шыраса илессӗ.

б) Ӗненекенсен ушкӑнӗсене усӑ курма панӑ кӗлӗ ҫурчӗсене страховкӑ тумалисем:

хуласенче — страховой суммӑн 100 тенкинчен 25 пус;

йалти вырӑнсенче страховой суммӑн 100 тенкинчен 85 пус;

в) частнӑй организацие (йе ҫынсене) арендӑна йе усӑ курма урӑх майпа панӑ оборудованилӗ промышлӗннӑҫ предприйатисене страхламалисем:

I-мӗш группӑри предприйатисемшӗн—страховой суммӑн 100 тенкинчен 75 пус;

II-мӗш группӑри предприйатисемшӗн—страховой суммӑн 100 тенкинчен 110 пус;

III-мӗш группӑри предприйатисемшӗн—страховой суммӑн 100 тенкинчен 170 пус.

Промышлӗннӑҫ предприйатийӗсен 1-ш группине кӗреҫҫӗ: металл ӗҫлекен заведенисем—йавӑҫпа усӑ курманнисем, минералсене кӑларакан тата ӗҫлекен производствӑсем (кирпӗч, кӳршек-чӳлмек, извӗҫ ҫунтаракан савӑтсемсӗр пуҫне), ҫӗвӗ, атӑ-пушмак ҫӗлекен, скорняжнӑй, щоткӑ тавраш, лаша кӳлмели тавраш тӑвакан мастерскойсем.

III-мӗш группӑна кӗреҫҫӗ: йӑвӑҫ ӗҫлекен производствӑсем (вӑл шутрах йӑвӑҫа химилӗ майпа ӗҫлекен, смала, тикӗт кӑларакан тата ытти савӑтсем), рогожа, курӑс-мучала тата корзинкӑ маҫтерскойӗсем, химилӗ производствӑсем (вӑл шутрах нефть ӗҫлекен т. ыт. час тивсе кайакан йапаласене ӗҫлекен савӑтсем).

II-мӗш группӑна ытти мӗн пур производствӑсем кӗреҫҫӗ.

III. Ҫак тарифра кӑтартнӑ ставкӑсем тӑрӑх шутласа кӑларнӑ тӳлевсене ҫулталӑкри страхованишӗн илессӗ.

Ҫулталӑкран сахалрах срукӑха страховани тунишӗн страховкӑ тӳлевӗсене мӗн чухлӗ вӑхӑтлӑха страховани туни не кура, анчах уйӑхлӑх срукран сахал мар шутласа—тулли уйӑхран кайа пулсан, тулли уйӑх шутланать—илессӗ.

IV. Тариф тӑрӑх чул ҫурт тесе (1-мӗш пайӗ) ҫакӑн пек ҫуртсем шутланаҫҫӗ: стенисене чулран, кирпӗчрен купаласа тунӑ, бетонран, железобетонран тунӑ ҫуртсем, ҫавӑн пекех тата стенисен тул йенне хӗртнӗ кирпӗчрен, шал йенне хӗртнӗ кирпӗчрен, тунӑ ҫуртсем.

Ытти мӗн пур ҫуртсене (йӑвӑҫран, хутӑш, саманран т. ыт. те тунисене) тариф тӑрӑх ытти ҫуртйӗрсем шутне кӗртеҫҫӗ.

ССР Сойузӗн Финанс Халӑх Комиссарӗн зам. **М. Бодров.**

Госстрахӑн ССР Сойузӗн Тӗп Управленин начаӆникӗ **А. Власӑв.**

Уполномоченный Чувашглавлита № 673. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпр по ЧАССР., заказ № 821 Ф. 6. БЕХ64 б. 25